Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

7 (8171) № ✻ Шăмат кун, 2014 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 1-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## Программа пурнăçланнă

Январĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Пĕтĕм Раççейри селектор канашлăвне хутшăннă. Унта гражданисене ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçармалли программăсене пурнăçласа тĕлĕшпе 2013 çулăн малтанхи пĕтĕмлетĕвне тата нумай хваттерлĕ çуртсенче пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсама регион тытăмĕсем йĕркелессине сӳтсе явнă.

Канашлура палăртнă тăрăх 2013 çулта Чăваш Енре республикăн икĕ программине пурнăçлассипе ĕçленĕ: 2012 – 2013 çулсенче «Граждансене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă, ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси» тата 2013 – 2017 çулсенче «Граждансене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă, ишĕлме пултаракан çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси».

Пĕррмĕш программăна килĕшӳллĕн 67 çуртра пурăнакан 226 çемьене хăтлă хваттерсемпе тивĕçтерме пăхнă пулнă. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне ăна пурнăça кĕртнĕ. Иккĕмĕш программăпа 264 çуртра пурăнакан 1460 çемьене хваттерпе тивĕçтерме 1381,3 млн. тенкĕ уйăрма пăхнă. 2014 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне программăна пурнăçласа 31 çуртри 299 çынна çĕнĕ 121 хваттерпе тивĕçтернĕ.

2008 – 2013 çулсенче Чăваш Республикинче нумай хваттерлĕ çуртсене юсама 2,982 млрд. тенкĕ уйăрнă. Çак укçатенкĕпе нумай хваттерлĕ 1416 çурта тĕпрен юсанă.

Çулталăк итогĕсене пĕтĕмлететпĕр

## Ĕçлĕ калаçу пулĕ

«Çĕнтерӳ ялавĕн» иртнĕ номерĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумне В. Ананьева сăмах патăмăр. Паянхи номерте (2-мĕш стр. пăхăр) район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕн В. Никитинăн статйи пичетленет. Сăмах вĕсенче – районăн 2013 çулхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн итогĕсем тата малашлăх планĕсем пирки.

Тунти кун, февралĕн 3-мĕшĕнче, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев анлă ларура районăн 2013 çулхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн итогĕсем тата 2014 çулхи тĕллевсем пирки тухса калать. Лару ĕçне ЧР Патшалăх Канашĕн ертӳçи Ю. Попов хутшăнать.

Район аталанăвĕн иртнĕ çулхи итогĕсене халăхпа тĕплĕн тишкерни тĕрĕс хак пама май парĕ, малашлăх тĕллевĕсене уçăмлатĕ.

Анлă лару ĕçне кăмăл пуррисем хутшăнма пултараççĕ. Вăл 13 сехетре район администрацийĕн ларусен залĕнче уçăлать.

Çитĕнӳ

## Райхаçат тиражĕ – 5074 экземпляр

**«Çĕнтерӳ ялавĕн» паянхи номерĕ 5074 экземплярпа пичетленчĕ.**

**Тăхăрвуннăмĕш кăткăс çулсенче район хаçачĕ 3 пин ытларах тиражпа тухса тăнă. 5 пин экземпляр урлă каçасси редакци коллективĕн нумай çулхи тĕллевĕ пулнă. Палăртнине пурнăçлама пултарнишĕн савăнатпăр.**

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илекен кашни çынна тав сăмахĕ калатпăр. Редакци вулакансене валли парне те хатĕрлет. Кашни подписчика çывăх вăхăтра стена çине çакмалли календарь (А3 формат) парнелĕпĕр. Кун пирки тĕплĕн тепре пĕлтеретпĕр.**

**Малашне те пĕрле пулар!**

**Райхаçат редакцийĕ.**

ЧР Пуçлăхĕн стипендиачĕсем

## Çамрăк, хастар, тăрăшуллă



*«Кашни ир ĕçе лайăх кăмăлпа каятпăр, хамăр тивĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама, больницăри, районти обществăлла пурнăçа активлă хутшăнма тăрăшатпăр», – теççĕ Муркашри тĕп больницăра вăй хуракан Марина Онькована Светлана Кириллова (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла). Марина Николаевна кунта 2007 çултанпа ĕçлет, хĕрарăмсен консультацийĕнче акушеркăра тăрăшать. Светлана Геннадьевна – участокри медицина сестри, больницăра вăл 2006 çултанпа. Тăрăшуллă специалистсем кăçал Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине тивĕçрĕç.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Авиарейссем çĕнĕрен уçăлаççĕ

«АК БАРС АЭРО» авиакомпани 2014 çулхи январĕн 31-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 29-мĕшĕччен «Уфа – Шупашкар» тата «Самара – Шупашкар» маршрутсемпе авиарейссем йĕркелет. Пассажирсене илсе çӳреме «Cessna - 208» самолетсемпе усă курĕç.

Шупашкар аэропортĕнче февралĕн 3, 5, 7 тата 10-мĕшĕсем валли билетсене сутаççĕ ĕнтĕ.

Шупашкартан Уфана самолет 9 сехет те 55 минутра çула тухать, 14 сехетре вырăна çитет (тунти кун, юн кун тата шăмат кун). Каялла Пушкăрт Республикин тĕп хулинчен вырăнти вăхăтпа 14 сехет те 40 минутра тухать, Шупашкара 15 сехетре çитет. Билет хакĕ 1775 тенкĕрен тытăнса 4770 тенкĕ таран.

Самарăна самолет тунти кун, юн кун тата эрне кун 15 сехет те 35 минутра çула тухать, 17 сехет те 5 минутра çитет. Каялла та çав кунах вĕçет. Билет хакĕ 2075 тенкĕрен тытăнса 3305 тенкĕ таран.

Кирлĕ информацие çак телефонсемпе илме пулать: 301-487; 621-471; 622-245; 627-217.

**ЧР Транспорт тата çул-йĕр хуçалăх министерстви.**

Пенси илекенсене пĕлме

## 9 пин пенсионерăн пенси ӳсет

Раççей Федерацийĕн Правительствин 2014 çулхи январĕн 23-мĕшĕнчи постановленийĕпе килĕшӳллĕн ватлăха, инвалидноçа тата çемьере тăрантаракана çухатнине пула паракан ĕç пенсийĕсен виçине кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 6,5 процент ӳстерме палăртнă.

Республикипе 324 пин пенсионерăн, районĕпе 9 пин пенсионерăн пенси виçи ӳсет. Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕсем вăтамран 615 тенкĕ ӳсĕç, уйăхне вăтамран 10,2 пин тенкĕпе танлашĕç. Ку вăл республикăри пенсионерсен пурăнма кирлĕ минимумĕнчен (2013 çулхи 4-мĕш кварталта – 4963 тенкĕ) 2 хут нумайрах. Чăваш Енре ватлăха пула паракан ĕç пенсине пĕтĕм пенсионерсен 84 процентĕ, районта 90 процентĕ илсе тăрать.

Пенси виçисене ӳстернĕ май уйăхсерен ĕç пенсийĕ тӳлеме каякан тăкаксем 200 млн. тенкĕ чухлĕ ӳсеççĕ, 3,2 млрд. ытла тенкĕпе танлашаççĕ.

Инфляцие кура ĕç пенсийĕсене çуллен февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса индексациллеç. Пенси фончĕн тупăшĕ ӳснĕ май пенсисене тепĕр хут 2014 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ӳстерме пăхнă. Çавăн чухнех социаллă пенсисен, федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансене уйăхсерен паракан укçа тӳлевĕсен виçисене тата соцпакет хакне те ӳстерме палăртаççĕ.

**Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

Районта: ĕнер, паян, ыран

## Ыран – йĕлтĕр йĕрĕ çине

Ыран, февралĕн 2-мĕшĕнче, 11 сехетре «Йĕлтĕр йĕрĕ – 2014» массăллă ăмăртăва Муркашри йĕлтĕр базинче савăнăçлă лару-тăрура уçаççĕ.

Ăмăртăва спорта юратакан кашни çын хутшăнма пултарать. Çул ӳсĕмне кура кашниех тĕрлĕ дистанцире старта тухма пултарать – ачасенчен пуçласа ветерансем таранах. Çак ăмăртăва пирĕн районта çуралса ӳснĕ тĕнчипе палăрнă биатлонистка Татьяна Моисеева Олимп факелĕпе çитмелле.

## Ветерансем канашларĕç

Январĕн 29-мĕшĕнче районти ветерансен канашĕн, ял хуçалăхĕнче ĕçленĕ ветерансен тата пенсионерсен пĕрлешĕвĕн вырăнти канашĕсем пĕрлехи ларăва пухăнчĕç. Асăннă канашсен ертӳçисем – М. Виноградова, В. Вязов тата А. Скворцов хăйсен сăмахĕнче иртнĕ çулхи ĕçсене пĕтĕмлетрĕç.

Ларура çак çул валли ĕç планĕсене çирĕплетрĕç. Вĕсене тишкерсен ветерансем кăçал пĕлтĕрхинчен активлăрах пурăнасси куç кĕрет, мĕншĕн тесен кăçал район 70 çул тултарнине тата Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 70 çул çитнине халалланă мероприятисем чылай ирттерме палăртса хунă.

В. Вязов каланă тăрăх хальхи вăхăтра республикăра агропромышленность комплексĕнче вăй хунă ветерансен энциклопедине хатĕрлессипе хĕрӳ ĕç пырать. Çавна май Муркаш тăрăхĕнчи ветерансен списокне те тĕплĕн хатĕрлеççĕ.

## Çĕнĕ çулта – çĕнĕлĕх

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Муркашри халăха социаллă пулăшу паракан центрĕ халăха тĕрлĕ енлĕ пулăшу парать: реабилитациленмелли техника хатĕрĕсемпе тивĕçтернинчен пуçласа ватăсене килте пăхса тăни таранах. Центр ертӳçи О. Иванова центр ĕçне пĕтĕмлетме пухнă ларури докладран çакă уççăн курăнчĕ.

О. Васильева пĕлтернĕ тăрăх центрăн малаллахи ĕçне çĕнĕлĕхсем те кĕртме палăртнă. Сăмахран, çулталăкăн иккĕмĕш кварталĕнчен пуçласа ĕçе участок принципĕпе пурнăçлама та тытăнаççĕ. Ку чи малтанах вырăнсенче социаллă ăнăçсăрлăха асăрхаттарассипе çыхăннă.

Центр ĕçне район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова, Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи В. Аникина тата ыттисем те хутшăнса центр ĕçне лайăх енчен палăртрĕç.

## Пĕр шухăшлăн – пăр çине

Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Шуркассинче пурăнакан хĕрарăмсем каçсерен шейпинг занятийĕсене çӳрени пирки вулакансем пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çак ялти арçынсен те тунсăхлама вăхăт çук: вĕсем ялти пĕве çинче хоккейла выляма килĕштереççĕ-мĕн. Кунта кунĕпех çын татăлмасть.

Шуркассисем усă сывлăшри активлă кану сывлăх çине лайăх витĕм кӳнине палăртаççĕ. Ялта пурăнакансем вырăнти депутата Алим Андриянова пуçарулăхшăн тав сăмахĕ калаççĕ. Спорта юратакан, пуçаруллă та мал туртăмлă çыннăн шухăшĕпе ыттисем те килĕшни ял çыннисемшĕн усăллă кăна.

## Вĕренӳри çивĕч ыйтусемпе

Районти шкулсенчи директорсен вĕренӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕсем çак эрнере вĕрентӳ тытăмĕн актуаллă ыйтăвĕсене сӳтсе явнă.

Педагогсем «Раççей Федерацийĕнчи вĕренӳ çинчен» федераци саккунĕпе килĕшӳллĕн кашни шкулăн мониторинг модельне хатĕрлемелли çинчен, сывлăх тĕлĕшпе чикĕленнĕ тата инвалид ачасемпе психокоррекци ĕçне йĕркелесси çинчен тĕплĕн калаçнă.

9 тата 11 классенче вĕренекенсен экзамен тапхăрĕ пуçланиччен вăхăт нумаях юлмасть. Çавăнпа та ку темăпа та анлă калаçу пулнă. Пирĕн районта кăçал пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене 200 çын тытмалла, вĕсен списокне ятарлă базăна кĕртнĕ ĕнтĕ.

## Выставка ĕçлет

Калайкассинчи вăтам шкулта Афганистан Республикинчи çар операцийĕсене хутшăннă пирĕн салтаксен музейĕ ĕçлени республикипех паллă ĕнтĕ. Çамрăксене патриотизмла воспитани парасси çине асăннă шкулта уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрнине çирĕплетсе тата асăннă вăрçăран пирĕн çарсене илсе тухнăранпа 25 çул çитнине халалласа иртнĕ кунсенче шкулта Афган вăрçин выставкине уçрĕç. Ăна курма пыракансем Афганистан фронтĕнчи сăн ӳкерчĕксемпе, пирĕн салтаксен тумтирĕпе, вĕсен çырăвĕсемпе паллашма пултараççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

# Строительство пырать – пурнăç аталанать

Иртнĕ çул итогĕсем



Районта пурăнмалли çурт-йĕр, социаллă сфера объекчĕсем, çулсем тăвас тата юсас ĕçсем малаллах пыраççĕ. Иртнĕ çул та ку ĕçсем япăх мар пулса пычĕç. Инвестици ĕçне-хĕлне аталантарма иртнĕ çул пĕтĕмпе пур çăл куçран 1137,1 млн. тенкĕ укçа уйăрнă. 29360 тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута янă, вăл шутран 28144 тăваткал метр харпăр хăйĕн çурт-йĕрне.

«Моргаушская» строительство организацийĕ Муркашра Парковая урамра 24 хваттерлĕ пурăнмалли çурт ĕçе кĕртрĕ. Халĕ Москакассинче 21 хваттерлĕ çурт тăвас ĕçсем пыраççĕ. Кунсăр пуçне Мăн Сĕнтĕрте «ПМК «Водоснабжения» ООО 51 хваттерлĕ çурт тума тытăннă.

Районта патшалăх пулăшăвĕпе усă курса харпăр хăй çурт-йĕрне тăвасси анлă сарăлнă. Федерацин «Социальное развитие села до 2013 года» тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн çурт-йĕр тума тата туянма 8 çамрăк çемьене тата çамрăк специалистсене пĕтĕмпе 5853,42 пин тенкĕлĕх, 5 граждана 2222,78 пин тенкĕлĕх социаллă тӳлевсем панă. Федерацин «Жилище» тĕллевлĕ программин «Обеспечение жильем молодых семей» подпрограммипе 18 çамрăк çемьене 11517,298 пин тенкĕлĕх социаллă тӳлевсемпе тивĕçтернĕ. 2013 çултах тăлăх ачасене çурт-йĕрпе тивĕçтерме района республикăран 5272,74 пин тенкĕ уйăрнă. 2014 çулта çав тĕллевпе 4473,2 пин тенкĕ уйăрма пăхнă. Кăçал район администрацийĕ тăлăх ачасем валли Мăн Сĕнтĕрте 3 хутлă 15 хваттерлĕ пурăнмалли çурт тăвассипе аукцион ирттерет. Проектне хатĕрлесе çитерне ĕнтĕ.

Вăрçă ветеранĕсемпе вилнĕ çар çыннисен тăлăх мăшăрĕсем пĕтĕмпе 244 çын хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă. 2013 çулта вара кун пеккисене 17 çынна çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма 18497 пин тенкĕ уйăрса панă. Çак вăхăта хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмаллисен списокĕнче вăрçă ветеранĕсемпе вилнĕ салтаксен тăлăх мăшăрĕсем 12 çын.

Муркашра лицей çуртне реконструкцилесе ача сачĕ тăвас ĕçсем пыраççĕ. Тĕп ĕçсем вĕçленеççĕ ĕнтĕ, шалти ĕçсем пыраççĕ. Ку объекта хута яма пĕлтĕр 14685,97 пин тенкĕ уйăрма пăхнă пулнă. Тунă ĕçсен алă пуснă акчĕсене кура кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 9749 пин тенкĕ куçарнă. Ял тăрăхĕсен территорийĕсенче комплекслă компактлă строительство ĕçĕсем тумалли программăпа Шурча шкулĕн çуртне юсама 2398,8 пин тенкĕ, кунти Культура çуртне юсама 1484,32 пин тенкĕ уйăрнă.

Район территорийĕнче автомобиль çулĕсем 200,2 километр тата 336 метр тăршшĕ 9 кĕпер. Вĕсене тытса тăма 15760 пин тенкĕ уйăрнă. Ялсенчи 376 километр автомобиль çулĕсене пăхса тăма вара 4949 пин тенкĕпе усă куртăмăр. Район территорийĕнчи çулсене юсама 6673 пин тенкĕ тăкакланă. 547 метр тăршшĕ «Атăл – Вăрăмой» автоçула юсаса тухнă, «Сĕнтĕр – Ильинка» автоçул хĕррипе 1857 метр çуран çӳрекенсен çулне тунă. Ял территорийĕсемпе иртекен çулсене юсама 11680 пин тенкĕ тăкакланă.

Нумай хваттерлĕ çуртсен 5 картишне юсама 3785 пин тенкĕ, «Тойкилтĕ – Кĕртекасси – Исетеркке» автоçула тума 981 пин тенкĕ, Çурлатринче Воробьев урамĕнче çул тума 4793 пин тенкĕ хывнă. Пĕтĕмĕшле районĕпе вара пур йышши çулсене тытса тăма, юсама тата тума 48621 пин тенкĕпе усă курнă. Вăл шутран республикăран 38093 пин тенкĕ, вырăнти бюджетран 10528 пин тенкĕ уйăрнă.

Экономикăн социаллă пĕлтерĕшлĕ секторĕсенчен пĕри пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ пулса тăрать. Ку вăл нумай отраслĕлĕ комплекс. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисемпе тивĕçтерес тĕлĕшпе муниципалитетăн пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн «Моргаушское» унитарлă предприятийĕ тĕп ĕçсене пурнăçлать. Иртнĕ çул вăл пурнăçланă ĕçсен калăпăшĕ 44,5 млн. тенкĕпе танлашрĕ. 2012 çулхипе танлаштарсан ку вăл 116,7 процент.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕн ĕçĕ-хĕлĕ те эффективлă. Паянхи куна компани 70,45 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕре е 73 çурта пăхса тăрать. Вĕсенчи 1487 хваттерте 3400 çын пурăнать. Муниципалитетăн çурт-йĕр фончĕн 83 процентне приватизациленĕ. Ертсе пыракан компанин ресурссемпе тивĕçтерекен предприятисем умĕнче парăмсем çук. Хваттерсенче харпăр хăйĕн шутлав приборĕсене вырнаçтарас ĕçсем пыраççĕ. Паянхи куна шывпа усă курнине шута илмелли приборсене 1049 хваттерте вырнаçтарнă. Ку вăл пĕтĕм хваттерсен 71 проценчĕпе танлашать. Кунсăр пуçне нумай хваттерлĕ çуртсен шывпа усă курнине шута илмелли пĕрлехи приборĕсене вырнаçтарас ĕçсем пыраççĕ.

Иртнĕ çул нумай хваттерлĕ 4 çурта тĕпрен юсама май килчĕ. Çав тĕллевпе пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăламалли фонд шутĕнчен, республика тата муниципалитет бюджечĕсенчен 6393 пин тенкĕ тăкакланă.

Граждансене аварилĕ çурт-йĕртен куçарма 2013 çулта 19405 пин тенкĕ уйăрнă. Аукцион ирттерсе 19 хваттерте пурăнакансене çĕнĕ хваттерсемпе тивĕçтерме чикĕллĕ яваплăхлă «ПМК «Водоснабжения» обществăпа муниципалитет контракчĕ турăмăр.

Энергоресурссен тарифĕсем ӳссех пыраççĕ. Çавна май пурăнмалли çуртсемпе обществăлла çурт-йĕре хутса ăшăтассипе энерги, ăшă перекетлеме май паракан технологисемпе анлă усă курасси питех те пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Уйрăмах çакна халĕ çĕклекен çĕнĕ çуртсем тĕлĕшпе каламалла.

Бюджет учрежденийĕсенче ăшă счетчикĕсем вырнаçтарас ĕç вĕçленчĕ. Кунпа пĕрлех çурт-йĕрсенче, учреждениесенче пур çĕрте те энергетика тĕрĕслевĕ туса ирттернĕ, энергопаспортсем илнĕ. Чуманкасси шкулĕн, кунти ача сачĕн ăшă памалли системисене реконструкцилерĕмĕр. Халĕ вĕсен харпăр хăйĕн уйрăм котельнăйсем. Çак ĕçсенех Москакасси шкулĕпе ача садĕнче, Мăн Хураçка шкулĕнче тата Мăн Сĕнтĕрти ача садĕнче туса ирттермелле.

Пристрой туса пĕтерсе Мăн Сĕнтĕрте информаципе культура центрĕн çĕнĕ çуртне хута яма май килчĕ, Шомикра çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ ĕçleме тытăнчĕ. Çак вăхăта Кашмаш шкулне тума тата Мăн Сĕнтĕрти ача садне реконструкцилеме проектсем хатĕрлес ĕçсем пыраççĕ.

Кăçал пирĕн умра тăракан задачăсем те пĕчĕк мар. Чăваш Республикин Президенчĕн 2009 çулхи январĕн 19-мĕшĕнчи «Об осуществлении пилотного проекта по комплексной компактной застройке и благоустройству сельских поселений в Чувашской Республике» Указĕпе килĕшӳллĕн конкурса хутшăнас пулать. Çĕнĕ çурт-йĕр хута ярассипе вара «Социальное развитие села» тĕллевлĕ программăна тата федерацин «Жилище» тĕллевлĕ программине хутшăнни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Федерацин тата республикăн программисемпе социаллă тӳлев шучĕпе уйăракан укçа-тенкĕпе пĕтĕмпех усă курас пулать.

Çулсен ыйтăвĕ те кун йĕркинчен тухмалла мар. Муниципалитет çул-йĕрне тăвассипе, юсассипе тата кирлĕ шайра тытса тăрассипе çине тăрса ĕçлемелле.

Муркаш лицейĕн çуртне реконструкцилесе ача сачĕ уçас ыйтăва кăçал епле пулсан та татса памаллах. Кунсăр пуçне пирĕн умра кăçал Мăн Шаптакра фельдшерпа акушер пунктне уçас задача тăрать. Çавăн пекех çĕнĕ урамсене электрификацилес ĕçсем те вĕçленмен-ха. Электричество паманнисем çак вăхăта 9 урам.

Апла пулсан лăпланса ларма сăлтав çук. Иртнĕ çул палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртессипе япăх мар ĕçлесе пытăмăр пулин те, кăçал туса ирттермелли ĕçсен калăпăшĕ те пĕчĕк мар. Эпир хамăр умри задачăсене лайăх ăнланатпăр. Пĕрлехи вăйпа вĕсене ăнăçлăх татса пама май пулĕ.

**В. НИКИТИН,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин пайĕн пуçлăхĕ.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă аттепе аннене – Çĕньял Чемей ялĕнче пурăнакан **Зоя Тимофеевнăпа Владимир Николаевич МАРКОВСЕНЕ** сумлă юбилейпа – февралĕн 4-мĕшĕнче çемье çавăрни 45 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Эсир пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Тавах сире ырă кăмăлусемшĕн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Сывлăхăр сирĕн çирĕп пултăр, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Пире, виçĕ ачине, ура çине тăратнăшăн, ылтăн аллусемшĕн тав сăмахĕ калатпăр. Эпир сире юрататпăр, сирĕнпе мухтанатпăр.

Çак уйăхрах февралĕн 1-мĕшĕнче пирĕн аттен çуралнă кунĕ, вăл 64 çул тултарать, хĕрĕн Регинăн, кинĕн Наташăн çуралнă кунĕсем пулаççĕ. Вĕсене те çирĕп сывлăх, телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, 7 мăнукĕ, тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**



Пирĕн юратнă аттепе аннене, хунямапа хуняçана, мамакпа маçака, кукамайпа кукаçине – Турай ялĕнче пурăнакан **Христина Егоровнăпа Георгий Тимофеевич БЫЧКОВСЕНЕ** 90 çулхи юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Канлĕ ватлăх пултăр сире. Малашне те ачусен, мăнукусемпе тăванусен ăшшине туйса килĕштерсе пурăнма Турри пулăшса пытăр.

**Саламлаканĕсем: ачисем, мăнукĕсем, тăхлачисем, мĕн пур тăванĕ.**

Муркашра пурăнакан юратнă мăшăра, аттене, хуньстарике, асаттене, хăтана тата тăвана – **Георгий Георгиевич СИМАКОВА** 60 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Эсĕ ĕçрен ютшăнманни, ачусемпе çывăх тăванусене пулăшма ялан хатĕр пулни тата вăй çитнĕ чухлĕ тĕкĕ пани сана Çĕр çинче Турă панă çул-йĕр тесе шутлатпăр. Чăваш ял хуçалăх академийĕ хыççăн ĕç ĕмĕрне ял хуçалăхĕпе çыхăнтартăн та 15 çул Жданов ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăха ертсе пытăн. Ĕç йĕркелĕвне пĕлнипе тăван ене (Мăн Хураçка) районта, республикăра малтисен ретне кăлартăн, Раççей шайĕнче ырă ятлă турăн. Хыççăнхи вăхăтсенче район администрацийĕн ял хуçалăх управленине ертсе пырса, çут çанталăка хӳтĕлекен специалист пулса хăвăн ятна ямарăн. Тулли пурнăç çулĕпе утса санăн татах нумай çул ырă курса, пире савăнтарса тата пирĕн савăнăçпа хăвăн хĕпĕртесе пурăнмалла пултăр.

Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма вăй-хал парса тăрать.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кинĕ, мăнукĕ, хăти-тăхлачисем, тăванĕсем.**



Юратнă аннене, асаннене, хунямана, пирĕн çывăх çыннăмăра – Çĕньял Хуракасси ялĕнче пурăнакан **Нина Гордеевна КСЕНОФОНТОВĂНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе пĕтĕм чунчĕререн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Ачусен, мăнукусен хаваслă сассине илтсе савăнмалла пултăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр.

**Салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**



Йӳçкасси ял тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ Отаркка ялĕнче пурăнакан **Вячеслав Анатольевич ПЕТРОВА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

Юратнă мăшăра, хисеплĕ аттене, сăпайлă асаттене, ырă кăмăллă пирĕн тăвана – Муркашра пурăнакан **Анатолий Ананьевич МАСТЕРОВА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем çитсех пыччăр, ăнăçу санпа яланах пĕрле çӳретĕр. Нумай çул пурăнма Турри чирчĕртен сыхлатăр, вăй-хал парса тăтăр. Мăшăрун, ачусемпе мăнукусен юратăвĕ, çывăх тăванусен ăшши кулленхи пурнăçра вăйхăват парса тăччăр.

Çăл куçне валакĕ кирлĕ
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхма.
Аттеçĕм, пире эс кирлĕ
Туслă йышпа пурăнма.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕ Софья, тăванĕсем тата Суворовсен, Ермолаевсен, Игнатьевсен çемйисем.**



Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, кĕрĕве, аттене, кукаçине, асаттене – Мăн Шаптак ялĕнче пурăнакан **Александр Семенович АЛЕКСЕЕВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăхпа вăй-хал, тату пурнăç, тумхахсăр кун-çул сунатпăр. Телейпе ăнăçу яланах санпа пĕрле пулччăр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр. Татах та нумайнумай çул пурăнма Турри чир-чĕртен сыхлатăр, вăй-хал, телей, пархатар парнелетĕр. Тавах сана, аттеçĕм, пире юратса ӳстернĕшĕн, йывăр самантсенче пулăшса тăнăшăн, пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн. Эпир сана юрататпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хунямăшĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсем, кинĕ, мăнукĕсем.**

Пултарулăх

# Ентешĕмĕре тĕнчипех пĕлеççĕ




Валерий Петровский журналист тата писатель 2013 çул итогĕсемпе Nazar Look журналăн премийĕн лауреачĕ пулса тăнă. Nazar Look – литература журналĕ, икĕ чĕлхепе – акăлчан тата Крым тутарĕсен чĕлхисемпе пичетленет. Литератор Nazar Look журналăн акăлчан версийĕн хуплашки çине 2012 çулхи сентябрьтех лекнĕ. 2013 çулхи август уйăхĕнче вара Румынири ку журнала пичетлесе кăларакан Editura Studis издательство Валерий Петровскийăн Tomcat Tale (Мой брат Кот) кĕнекине пичетлесе кăларнă. Кĕнекене Раççейре сайра тĕл пулакан flash fiction (микрокалавсем) жанрпа çырнă кĕске калавсене кĕртнĕ. Кунсăр пуçне Валерий Петровскийăн хайлавĕсем асăннă издательствăн 2012 çулхи икĕ антологине кĕме тивĕçнĕ.

Валерий Петровский 1957 çулта Муркаш районĕнчи Çĕн Шоккăн ялĕнче çуралнă. «Истори» специальноçĕпе Чăваш патшалăх университетне, Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ют чĕлхесен факультетне, «Психологи» специальноçĕпе Хусан патшалăх технологи университетне вĕренсе пĕтернĕ. Журналист професси́не 1986 – 1987 çулсенче ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн комсомолăн аслă шкулĕнче илнĕ. 1987 – 1991 çулсенче «Молодой коммунист» хаçатăн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ.

2005 çултанпа проза çырать. Кĕске новелла жанрĕпе çырнă 150-на яхăн произведени авторĕ. Унăн калавĕсене акăлчан чĕлхиллĕ пур ют çĕр-шывра та пичетленĕ. Вăл шутра Америкăра, Канадăра, Индире, Ирландире, Великобританире, Çĕнĕ Зеландире, Австралире. Автор хăйĕн произведенийĕсене акăлчан чĕлхине хăех куçарать. Унăн пур калавĕ те тăван республикăна, тăван ене халалланăскерсем.

Литература енĕпе Раççейăн усă чемпионачĕн 2012 çул итогĕсемпе Валерий Петровский Раççейри чи пултаруллă 10 автор шутне кĕнĕ.

**Хамăр инф.**

# Чи лайăх хаçат – Мăн Сĕнтĕрсен

Конкурс



Январĕн 25-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкарти музыка шкулĕнче шкул ачисен регионсем хушшинче иртекен «Школа-пресс–2014» конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарчĕç. Ку конкурса Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви тата Çĕнĕ Шупашкарти «Грани» хаçат редакцийĕ йĕркеленĕ. Çак конкурс 2006 çултанпа пырать, саккăрмĕш хут иртрĕ. Кăçал унта Раççейри тĕрлĕ регионти 234 шкул хаçачĕ хутшăнма кăмăл тунă.

Чи малтанах çамрăк журналистсем валли мастер-класс пулчĕ. Эпир республикăри телевиденипе радиора, тĕрлĕ хаçат-журналта ĕçлекен журналистсемпе паллашрăмăр. Вĕсем хаçатри статьясене еплерех калăпласси, мĕнлерех ыйтусене хускатасси тата журналистикăн хăйне евĕрлĕ саккунĕсен вăрттăнлăхĕсене уçса пачĕç, шкул ачисене вулакан умĕнчи яваплăх пирки те асăрхаттарчĕç.

Чи интересли вара каярах пулчĕ. Пире, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта тухса тăракан «Школьная пора» хаçат редакцийĕн коллективне, сцена çинче Чăваш Республикин информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева **(сăн ӳкерчĕкре)** чысларĕ. Эпир «Ялти шкулта кăларакан чи лайăх хаçат» номинацире çĕнтерӳçĕсем пултăмăр. Пĕлтĕрхи конкурсра та эпир çак номинацирех çĕнтернĕччĕ. Пирĕн хаçата çакăн пек çӳллĕ шайра хакланăшăн чĕререн савăнтăмăр.

Шкул редакцине хаклă парнесем парса чысларĕç. Парнисем чăннипех те чаплă: фотоаппарат тата Çамрăк журналистсен лигин ертӳçи Евгений Суховерко парнеленĕ журналистсен «Волжские встречи–2014» фестивальне хутшăнмалли виçĕ путевка. Çамрăк журналистсен фестивалĕ май уйăхĕнче иртет. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта вĕренекен чи пултаруллă корреспондентсем фестивальте пулса курĕç.

Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн администрацине тата хаçатăн тĕп редакторне Надежда Владимировна Варюхинăна хаçата кун-çул панăшăн, корреспондентсен ĕçне йĕркеленĕшĕн чунтан тав тăватпăр.

Шкул хаçачĕ пирĕншĕн хамăрăн тĕллеве пурнăçламалли трибуна, эффективлă информаци хатĕрĕ, тĕрлĕ шухăша çыхăнтаракан массăллă информаци хатĕрĕ. Пирĕн шутпа хаçат кăларасси – питĕ кирлĕ ĕç. Эпир калав, очерк, тĕрленчĕк, статья, заметка, репортаж çырма кăна вĕренместпĕр, çыхăнуллă калаçма тата çырма, курăмлă тата логикăллă шухăшлама, ушкăнпа пĕрле ĕçлеме хăнăхатпăр, тăван шкул, тăван тавралăх, ял, республика, Раççей пурнăçĕпе кăсăкланатпăр, журналист профессийĕн никĕсĕсене алла илетпĕр.

Шкул хаçатне кăларасси йĕркене кĕнĕ ĕнтĕ. Кăçалхи январь уйăхĕнче 51-мĕш номер тухрĕ. Хаçатăн ятарлă корреспонденчĕсем хăйсем те кашни кăларăма çырма тăрăшаççĕ, ытти ачасене те хутшăнма хистеççĕ. Хаçатра интервью мелĕпе çыракансен йышĕ ӳсет.

Пирĕн хаçата шкулăн сайтĕнче те курма пулать. Шкул хаçатне вуласа ачасем шкул пурнăçĕпе, унта пулса иртекен ĕçсемпе паллашма пултараççĕ – пĕтĕмпех пĕлсе тăраççĕ. Тĕрлĕ проблемăсем çинчен уççăн каласа пама май тупаççĕ. Малаллахи плансенче – Мăн Сĕнтĕр салинче пулса иртекен ĕç-пуçпа, хыпарсемпе паллаштарасси те. Хамăр хаçата интереслĕрех тума тăрăшăпăр.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчен вĕренсе тухнă ачасем хушшинче профессиллĕ журналистсем çук пулин те, халĕ вĕренекенсем хушшинче пурнăçа журналистикăпа çыхăнтарас тĕллевлисем пур. Çак конкурс вара пирĕн хаçатра пултаруллă çынсем ĕçленине кăтартрĕ тесе шутлатпăр. Чăваш çыравçи, чăвашсен сӳнми çăлтăрĕ Петĕр Хусанкай «эпир пулнă, пур, пулатпăр!» тесе ахаль каламан. Пирĕн те пуласлăх пысăк.

**Н. ЧЕРВЯКОВА,**
**М. ЖАГЕРОВА,**
**Л. ТУШИЛКИНА.**

# Ачаран пуçланнă туртăм малаллах хĕмлентĕр

Культура çулталăкĕ



Хăш-пĕр çамрăк, учитель пулма вĕреннĕ пулин те, хăйĕн ĕç ĕмĕрне çакăнпа çыхăнтармах васкамасть. Учитель профессийĕ вара мĕн авалтан пархатарлă пулнă. Хальхи вăхăтра çакăн пĕлтерĕшне кашниех хăйне майлă ăнланать ĕнтĕ.

Эсир сăн ӳкерчĕкре Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Анаткас Апашри Радимир Семенова куратăр. Вăл – çамрăк вĕрентекен, юрă-кĕвĕри пысăк ăстаçă, район тата республика шайĕнчи тĕрлĕ мероприятие хăт кӳрекен.

Радимир Александровичăн ку тĕлĕшри туртăм мĕн ачаранах пуçланнă темелле, çак ăсталăх ашшĕпе амăшĕнчен куçнă. Ун йышшисем пирки улми йывăççинчен аякка ӳкмест теççĕ халăхра.

– Асрах-ха чи малтан алла хут купăс тытни тата хам тĕллĕн кĕвĕ кăларни. Эпĕ ун чухне кĕçĕн çулхи ача кăна пулнă та хама çав тери телейлĕ туйнăччĕ. Çакна хăнăхма килтех хут купăс пулнă. Ку енĕпе туртăм ытларах та ытлараххине сисме пуçларăм. Шкул пĕтерес тĕле вара çирĕп суйлав турăм. Ĕçлеме пуçланăранпа çулĕ нумаях çитмерĕ-ха, çапах çакăншăн пачах та ӳкĕнместĕп. Пĕлӳпе ăсталăха вăйлăрах аталантарма тăрăшатăп, – каласа парать çамрăк учитель.

Çапла вара культура училищинчен вĕренсе тухсан вăл аслă пĕлӳ илес тĕллевпе И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетне çул тытать, халĕ вăл виççĕмĕш курсра ĕнтĕ. Ку суйлавра тен чылай çул учительте ĕçленĕ ашшĕ-амăшĕн тӳпи те пулнах ĕнтĕ. Палăртма кăмăллă, Семеновсен учитель ĕçĕнчи династийĕ вăтăр çул ытла.

Кулленхи ĕçре педагогикăри инноваци технологине алла илме тăрăшать. Пушă вăхăт вара унăн пачах та çук тесен йăнăшмăп пулĕ. Районти ача-пăча пултарулăх çурчĕ урлă йĕркеленĕ «Музыка инструменчĕсемпе вылясси» кружок ертсе пырать. Çак ушкăнри ачасем Раççей шайĕнчи конкурсра пĕрремĕш степеньлĕ лауреат пулнă. Палăртса хăвармалла, вăл тĕрлĕ инструментпа вылять. Вĕренӳ ĕçĕ валли «Тăван тавралăха наци юрри-кĕвви урлă кăмăллар» педагогика проекчĕ хатĕрленĕ. Çамрăк вĕрентекен хăй çитĕнĕвĕсемшĕн Валерий Васильев шкул директорне, Валентина Николаевăна, Марина Митрофановăна тата Маргарита Ивановăна ырăпа асăнать.

Радимир Александрович районти çамрăк педагогсен «Пеликан» канашĕн членĕ, унăн ĕçĕнче те вăл активлăхпа палăрать. Учитель профессийĕнче пуçламăш утăм тăвакансем валли уçă уроксем хатĕрлет, мастер-классем йĕркелет. Вăл пуçаруллă пулнипе Чуманкасси ял тăрăхĕнче «Район пуласлăхĕ – çамрăксен аллинче» ятпа çамрăксен форумĕ иртрĕ. Пĕр çулхине тата вăл экономикăн Шупашкарти 5-мĕш форумне хутшăнма тивĕç пулчĕ.

– Эпĕ хама тин кăна вĕренсе пыракан çамрăк специалист шутне кĕртетĕп. Çумра пысăк опытлă ĕçченсем тата ăнланма пулăшма пултаракан çынсем пурри ытларах тăрăшма хавхалантарать. Самантпа усă курса мана вĕрентекен культура ĕçĕнчи хисеплĕ ĕçченсене Юрий Жуковпа Елена Черновăна пысăк тав сăмахĕ калатăп, çавăн пекех Москакассинчи Культура çурчĕн директорне Галина Голубевăна тата Надежда Кондукторовăна, – хавхаланса калаçать вăл.

Çамрăк вĕрентекен Москакассинчи информаципе культура центрĕ çумĕнчи «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ансамбльне илемлĕх кӳрет, шăпах çакăнтан пуçланнă та ĕнтĕ тин кăна ятарлă пĕлӳ илнĕ яшăн ĕç ĕмĕрĕ. Асăннă пултарулăх ушкăнĕ Чул хулара иртнĕ Пĕтĕм Раççейри «Раççей чунĕ» конкурсра Чăваш Республикин ятне чыслăн хӳтĕлерĕ. Районта художество пултарулăх конкурсне çулсеренех ирттересси ырă йăлара ĕнтĕ, 2012 çулта «Шуçăм» ушкăн пĕрремĕш вырăна тухма пултарчĕ. Çавăн пекех çамрăк учитель районти «Расна» эстрада ушкăнне хутшăнать.

Радимир Александрович волонтер пулнă май тĕрлĕ обществăлла ĕçре активлăх кăтартать кăна мар, ыттисене те çакăнта явăçтарма тăрăшать. Спорт мероприятийĕсенче те вăл пуçарулăх кăтартать.

– Сывă пурнăç йĕркине мĕн ачаранах пăхăнмалла, кашни çыннăн вăл е ку тĕрлĕ спорта суйламалла. Çĕнтерни пĕлтерĕшлех те мар, чи кирли вара – спортпа туслашма тăрăшни, – калаçăва тăсать Радимир Александрович.

Юрă-кĕвĕри ăсталăх унăн пĕр енĕ кăна пулĕ. Ялтан тухнă çын вара ял хуçалăх ĕçĕпе çывăх. Çавăн пекех вăл çамрăк утарçă, ку енĕпе те ăсталăх пухать. Пĕр çулхине утарçăсен ятарлă курсĕнче вĕренчĕ, халĕ çавна ĕçпе çирĕплетет. Хушма хуçалăха аталантарассинче унăн тӳпи тĕрлĕ енлĕ. Çапах та Радимир Александрович мĕн пур ăсталăхшăн ашшĕ-амăшне тав тăвать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Юбилей

# «Юратнă ĕç ывăнтармасть»



Шкул çулĕсем кашнин чунĕнчех тарăн йĕр хăвараççĕ. Çулсем иртнĕçемĕн юратнă вĕрентекенĕмĕрĕн ĕçне çĕнĕлле, тарăннăн ăнланатăн. Сăлтав тупсах тăван шкула çитсе хамăрăн учительсемпе тĕл пулса канашлас, урокĕсене итлес килет.

Етĕрне районĕнчи Кĕçĕн Чутай ачи Олег Тарасов шкул пурнăçне пĕчĕкренех килĕштернĕ, «иккĕмĕш ашшĕ-амăшĕ» вĕрентнине тимлĕн ăша хывнă. Çавăнпа вĕренĕвĕ те ăнса пынă, дневникĕнче чи лайăх паллăсем çеç хуçаланнă. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкултан ăнăçлă вĕренсе тухса тăван «Победа» хуçалăхра колхозникра тăрăшнă чухне те, Шупашкарти агрегат заводĕнче ĕçленĕ чухне те, çар тивĕçне кинолог пулса пурнăçланă чухне те тăван шкулти вĕренӳ тапхăрне самантлăха та манман. Пуринпе те хытă кăсăкланнă Олег. Вĕресе тăракан пурнăçра пĕлӳ ытларах та ытларах пухма тăрăшнă. Хăй пĕлнине вара ытти юлташĕсемпе пайлама тăрăшнă. Çынсем ăна итлеме çеç мар, чунĕсене уçса пама та туртăннă. Вĕсемпе калаçса каччă хăй те ăсталăхне, тавра курăмне аталантарса пуянланнă. Ăçта-ха ун пек çынсен пурнăçри вырăнĕ? Паллах, шкулта. Хăйĕн ĕмĕтне çывăхлатма Олег Тарасов 1980 çулта И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш Патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕнĕ.

Университетра вĕреннĕ çулсенче те каччă факультет пурнăçне питĕ активлă хутшăннă, тĕрлĕ кружоксемпе секцисен активлă членĕ пулнă, «Мерчен» ансамбльте кашăк çапакансен ушкăнĕпе республикăн нумай районĕнче тата тулашĕнче халăха савăнтарнă.

Йывăрлăхсене çăмăллăнах парăнтарнă патвар, тӳрĕ кăмăллă ял каччи. Çавăнпа та университетри пилĕк çул уншăн сисĕнмесĕрех тенĕ пек иртнĕ. Университетра вĕреннĕ чухне те, диплом илсен те Олег Иосифович перестройка тӳнтерлĕхĕсемпе чи хастар кĕрешекенсенчен пĕри пулнă. Çакăншăн чылай шар курма та тивнĕ. Çавах та шухăшне улăштарман. Тĕрĕслĕхе шаннă. Çĕр-шыва Б. Ельцин ертсе пынă çулсенче Олег Иосифовичăн тĕрĕслĕхĕ çиеле тухрĕ.

1985 çулта Олег Иосифович Тарасов истори тата обществоведени вĕрентекенĕн дипломне илсе Муркаш районĕнчи Кăпасри, каярахпа Мăн Сĕнтĕрти шкулсенче, 1989 çултанпа Москакассинчи вăтам шкулта вăй хурать. Кирек ăçта та вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен шанăçне тӳрре кăларса тăрăшать.

Пурнăçпа пĕрле шкул та, программăсем те, хамăр та улшăнатпăр. Паянхи педагогăн тĕп тĕллевĕ – хăвăрт улшăнса пыракан пурнăçра хăйĕн чăнчăн вырăнне тупса ăнăçлă ĕçлесе пыракансене вĕрентсе кăларасси. Йывăрлăхсене парăнса тĕрĕс çултан пăрăнса каясран вĕренекенсене хăйсене шанма, ӳсĕмсем патне çĕкленме, ӳкесрен асăрханма, сыхланма, ӳксен тепĕр хут ура çине тăма хăнăхтармалла. Çакна тума вара учителĕн ачасене юратнисĕр пуçне пĕлӳ те, культура та, професси ăсталăхĕ те, çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлни те çӳллĕ шайра пулмалла, артист ăсталăхне те алла илмелле. Олег Иосифовичăн вара çаксем пурте пур темелле. Юратнă профессийĕпе 29 çул ĕçлесе вăл çакна лайăххах çирĕплетрĕ. Çавăнпа та унăн вĕренекенĕсем район, республика, Раççей шайĕнче иртекен конкурссемпе олимпиадăсенче пысăк çитĕнӳсемпе савăнтараççĕ. Тĕслĕхрен, 9 класра вĕреннĕ чухне Кристина Киршева пĕрремĕш вырăн йышăнса «Орленок» лагере кайма путевка çĕнсе илнĕ.

– Олег Иосифович, паллах кашни урок шутласа хунă пек кал-кал иртмест, тĕрлĕ лару-тăру килсе тухать. Вĕсенчен чыслăн тухма мĕн пулăшать сире? – ыйтрăм ăста педагогран.

– Кулăш пулăшать, шӳт. Чăнах та, ялан кĕнекесем вуласа кăткăс ыйтусемпе ĕçлесе ачасем те ывăнса çитме пултараççĕ. Кун пек чухне хамăр хушăри кулăшла самантсемпе усă куратпăр. Паллах, вăл виçеллĕ пулмалла. Вĕренекенсем кăшт канса, хăйсене алла илсе ыйтусене хăюллăнрах, ăнăçлăрах хуравлаççĕ. Çавăн пекех кăтарту пособийĕсем, Интернетри, хаçат-журналсенчи материалсем вăй хушаççĕ, – савăнсах каларĕ вăл.

– Калăр-ха, ывăнтармасть-и сире шкул пурнăçĕ, ачасен шавĕ? – пĕлес килчĕ манăн.

– Юратнă ĕç епле ывăнтартăр. Хамăрăн çĕклем хул пуççисене пусмасть, теççĕ. Тăхтавсенче ачасем пĕр-пĕринпе хутшăнни, ытларах хускану туни савăнтарать те. Вĕсем манăн вĕренекенсем-çке. Класс ертӳçи пулнă май отчетсем, журналсем çырма, мероприятисене хатĕрленсе ирттерме вăхăт чылай иртет пулин те, ачасем интересленни, шанни, вĕсен куçĕнче хăлхем выляни вăй хушать. Ыран ак класс каллех ачасен сассипе тулать. Урок пуçлансан шавлама чарăнса ыйтусем пани, нумай пĕлессишĕн çунни савăнтарать. Вĕсен ыйтăвĕсем çине хуравсем шыранă май хам та нумай вĕренетĕп. «Тавах урокшăн» тени хăй мĕне тăрать. Манăн вара хăйсене тав сăмахĕ калас килет. Тавах вĕренекенĕмсем! Тĕнчене сирĕн куçпа курса пурнăç уттипе тан утма, çĕннине, хитрелĕхе курма, хăвăрпа пĕрле савăнма пулăшнăшăн тетĕн, – хуравларĕ вĕрентекен.

...Савнине вăйăра е улахра мар, çимĕç пахчинче шырамалла, – асăрхаттарнă пире шур сухалсем. Чăн та Олег Иосифович мăшăр пулмалли пикене хăй Кăпасри тулли мар вăтам шкулта директорта тăрăшнă вăхăтра кĕркунне, çĕр улми пухнă чухне, тĕл пулнă. Эльза Леонидовнăпа Олег Иосифович – пĕр-пĕрне хисеплекен мăшăр. Хĕрпе ывăл – Марийăпа Тарас çитĕннĕ. Вĕсем февралĕн 4-мĕшĕнче ашшĕне – Олег Иосифовича 55 çул тултарнă ятпа саламлама кĕрекене пухăнаççĕ. Эпир те юлташăмăра, ăста педагога сумлă юбилей ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, пысăк çитĕнӳсем сунатпăр.

**Н. ЗАХАРОВ.**

Район историйĕнчи ырă йĕр

# Халăха çывăхарах пуласси – ĕç тĕллевĕ



Пĕлтĕр райпо тытăмĕнчи автоматизациленĕ 6 магазинтан пĕри – «Дружба» продмаг. Кунта тавар туянакан тавара хăй суйласа илессине йĕркеленĕренпе 9-мĕш çул ĕç коллективне ертсе пыракан Татьяна Николаевăна (сăн ӳкерчĕкре варринче) çамрăк сутуçăсемпе куратăр. Людмила Князевăпа (сулахайри) Анастасия Шуляева райпо ĕçне тинтерех çеç кӳлĕннĕ пулсан та кунта çамрăксене шаннине çирĕплетрĕç. «Автоматизаци йĕркине пурнăçа кĕртсен суту-илӳ ĕçне оперативлăрах йĕркелесе пыма çул уçăлчĕ. Хаксемпе пăтранмастпăр, мĕн чуль тавар юлни, хăш тавар епле сутăнни, ял çыннисем хăш вăхăтра мĕнле тавара еплерех ыйтни халĕ йăлтах куç умĕнче. Çак çăмăллăхсемпе усă курса уйăхри тавар çаврăнăша пĕр миллион тенкĕрен irtтертĕмĕр. Тавар туянакансем пирĕн патăмăра килни ĕçлес хавхаланăва ӳстерет», – компьютер умĕнчен уйрăлмасăр калаçать Татьяна Вячеславовна.

Райпосен тытăмĕнчи куллен кирлĕ тавар сутакан магазинсен тата обществăлла апатлану предприятийĕсен ĕç-хĕлне вĕсем патшалăхпа ял çынни хушшинчи хутшăнăва йĕркелесе пыни тесе хакласа пырса кĕтĕм Мăн Сĕнтĕр райповĕн канturne. Çакнашкал пĕтĕмлетӳ тума мана ялсенче пурăнакансем асăннă райпон куллен кирлĕ таварсен магазинĕсем ял çыннипе пĕр шухăшлă ĕçлесе пыни пирки нумай калаçни пулăшрĕ.

Хуçалăх экономикипе предприяти аталанăвĕ ĕç коллективĕ ыранхи куна пăхса вăй хунипе йĕркеленсе пырать. Пурин хыççĕнче те ĕç тăрать: пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн. Çак çыхăну Мăн Сĕнтĕр райповĕнче аслăрах ăрусем пуçарнипех тачă хутшăнура. Çĕр-шыв рынок хутшăнăвĕсен çулне суйласа илнĕ май та коллектив халăхшăн тата халăхпа ĕçлессине иккĕмĕш вырăна хăвармарĕ. Йывăрлăхсене пăхмасăрах Мăн Сĕнтĕрти потребительсен обществи малалла аталанать, ыттисемшĕн чылайранпа тĕслĕх пулса тăрать. Юлашки çулсенче кунта ялсенчи тата Мăн Сĕнтĕрти магазинсене çĕнĕ сăн кĕртесси, вĕсенчи ĕç культурине ӳстересси, тавар туянаканпа çывăхарах пуласси анлăн вăй илчĕ. Çак çĕнĕлĕхсем çĕнĕ ĕç вырăнĕсем туса пани те ялта пурăнакансемшĕнех, район аталанăвĕшĕнех.

**ĔÇ ПĔТĔМЛЕТĔВĔ**

– Экономика тĕреклĕхĕ – пĕрле вăй хунинче. Çакна пирĕн коллективра кашниех ăнланать. Çавăнпа та пирĕн ĕçченсем вырăнсенче кашниех яваплăха туйса ĕçленинчен тĕлĕнме те кирлĕ мар, – журналист шухăшне ăнкарса калаçрĕ Мăн Сĕнтĕр райпо канашĕн председателĕ Л. Майкова. – Иртнĕ çул эпир, уйрăммăн илсен, магазинсенче 303 миллион та 578 пин тенкĕлĕх (виçĕм çулхин 107,4 проценчĕ), обществăлла апатланура 57 миллион тенкĕлĕх ытла (105,1 процент) тавар çаврăнăш турăмăр.

Раççей Федерацийĕн суту-илĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Республикин халăх ыйтăвне тивĕçтерекен сферăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ пуçланă сăмахран Мăн Сĕнтĕрсем çăкăр-булка продукцине реализацилессин калăпăшне пĕлтĕр 37 миллион та 263 пин тенкĕне (102 процент), эмел курăкĕсемпе ытти чĕр тавар пуçтарассине 35 миллион та 991 пин тенкĕне (124,1 процент) çитернĕ. Пĕр çын пуçне тавар сутассипе те райпо ĕçченĕсем малтан çĕнсе илнĕ çитĕнĕве чакарман: çын пуçне 53636 тенкĕлĕх тавар сутса Мăн Сĕнтĕрсем унчченхиллех республикăра малти вырăнта. Çак кăтартусенчен райпо çанă таварсах ĕçлеме тăрăшни, çĕнĕлĕхсемпе паллашсах тăни тата вĕсене алла илсех пыни курăнчĕ.

Паян ялта пурăнакансем килти хушма хуçалăха аталантарса çемье бюджетне пуянлатассипе тăрăшаççĕ. Ку ĕçре вара ялта пурăнаканпа икĕ енлĕ килĕшӳ тупасси, туса илнĕ продукцие тухăçлă сутасси пĕлтерĕшлĕ. Çакна пурте ăнланатпăр. Халĕ каланине витĕр курса тăрса Мăн Сĕнтĕр райповĕ ял çыннисемпе тачă çыхăну йĕркелесе пырать те.

**ШАНĂÇА ӲСТЕРЕÇÇĔ**

– Çĕр пин юрă çĕр-шывĕнче 100 çул ытла аталанатпăр та халăх шанăçне çухатас теместпĕр. Çынсен ыйтăвне туллин тивĕçтерессине хамăрăн тĕп ĕç тесе шутлатпăр. Çавна курах çĕнĕлĕхсене алла илсе пыратпăр: ялта пурăнакан хăйне пĕччен ан туйтăр. Хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçласа эпир иртнĕ çул çеç район бюджетне вуншар миллион тенкĕ тĕрлĕ налук тӳлерĕмĕр. Пирĕн ĕçе ку енчен пăхсан райпо тытăмне аталантармалла çеç, – ыррине шанса кăмăллăн калаçать Людмила Петровна. – Суту-илӳ сферинче конкуренци çулсерен вăй илсе пыни пире пуçаруллăрах пулма ыйтать. Çакна тума, ялти магазинсене çĕнĕ сăн кĕртме эпир çулсерен 15–17 миллион тенкĕ тăкаклатпăр. Пурнăç уттипе тан пырса юлашки 5 çулта хамăр тытăмри магазинсен 70 процентне, обществăлла апатлану предприятийĕсене 100 процент юсаса хăт кĕртсе паянхи кун ыйтакан шая çитертĕмĕр. Пĕлтĕр çеç райпо тытăмĕнчи 6 магазин ĕçне автоматизацилерĕмĕр. Çакă ял çыннисен ыйтăвне вăхăтра та пахарах татса памалли паянхи çулйĕр тесе шутлатăп.

– Мăн Сĕнтĕре килсен обществăлла апатлану предприятийĕнче пулса курмасан аван та мар пек. Кунта хăвăр пайщиксемпе, ытти ял çыннисемпе çыхăнăва еплерех йĕркелетĕр тата пур-и кунта малашлăх? – интереслентĕм калаçăва малалла тăсса.

Людмила Петровна ман çине пăхса ăшă кулă парнелесе тулли кăмăлпа хуравларĕ:

– Хăвăрт улшăнакан пурнăçра пурăнатпăр та çĕнĕлĕхсем тухсах тăраççĕ. Тавар туянакансен тата пирĕн услугăсемпе усă куракансен ыйтăвĕсем улшăнсах тăраççĕ. Ăна эпир апатлану предприятийĕсем тĕлĕшпе те курса-асăрхаса тăратпăр. Çак ĕç юлашки çулсенче обществăлла апатлану предприятийĕсене Чăвашпотребсоюзăн экономика ăмăртăвĕнче тăтăшах çĕнтерӳçĕсен ретне кăларчĕ. Ку пире савăнтарать.



Мăн Сĕнтĕр райповĕ халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессине çулсерен анлăлатса пырать. Çапла вара икĕ çул каялла кунта çӳç касмалли пӳлĕм уçнă. Ăна райпо тытăмĕнче 13 çул ытла ĕçлекен Татьяна Александровна Алешина (сăн ӳкерчĕкре сулахайри) ертсе пырать. Унăн ĕçтешĕ Светлана Леонидовна Егорова парикмахер – хăйĕн ĕçĕнче пуян опыт пухнă специалист.

**ÇĔНĔЛĔХСЕМПЕ ТУСЛĂ**

Обществăлла апатланури ĕçченсен тăрăшулăхне тивĕçлипе хаклама пулать. Кăтартăва ӳстерме кунта çĕнĕ технологисемпе ĕçлени пулăшать. Вĕсене вăхăтра алла илнĕрен «Нарспи», «Магнолия», «Шуçăм», «На рынке», «Пиццерия» кафе ĕçченĕсем мал туртăмлă ĕçленине палăртмалла. Вĕсем çĕнĕлĕхсене алла илессипе ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Райпо канашĕн председателĕпе ирттернĕ калаçура хатĕрлев ĕçĕ те айккинче юлмарĕ. Мĕншĕн тесен Мăн Сĕнтĕрсен ку ĕçне хăйне евĕр производство тесе те хаклама пулать. Ертӳçĕсемпе ĕçченсем тăтăшах шыравра пулни хатĕрлев ĕçне çӳллĕ шая çĕклерĕ. Иртнĕ çул 5 миллион тенкĕне яхăн хывнă хыççăн райпо тытăмĕнче çĕнĕ сывлăш панă хатĕрлев кантурĕ ĕçлеме пуçларĕ. Тĕплĕ тирпейлесе илемлетнĕ тата хăт кĕртнĕскер хатĕрлев ĕçĕн пĕтĕм комплексне пурнăçлать: ял çыннисем кунта килти хушма хуçалăх валли тырă авăртаççĕ, ашкакай, сĕт, пахча çимĕç, тир, кивĕ хут, эмел курăкĕ пухаççĕ т. ыт. те. 2013 çулта кунта виçĕм çулхинчен 6 миллион та 991 пин тенкĕ ытларах (35 миллион та 991 пин тенкĕлĕх) хатĕрлев çаврăнăшĕ тума пулăшнă. Ӳсĕм мари-ха çакă? Райпо хатĕрлев ĕçĕ çине пысăк тимлĕх уйăрнине пĕлтермест-и? Кунта хирĕçле хурав çук, пулма та пултараймасть.

Ĕçлекен коллектив аталанать. Иртнĕ çул ял çыннисен ыйтăвне туллин тивĕçтерес тесех райпора строительство материалĕсем сутмалли ятарлă вырăн уçрĕç. Райпо территорине, «Шуçăм» кафе умне асфальт сарса, магазинсем умне чечек йăранĕсем туса Мăн Сĕнтĕр салин хăтне, илемне ӳстерчĕç.

– Эпир пĕр вырăнта тăма хăнăхман. Ку таранччен мĕн тунине малалла аталантарасси, халăхпа çывăхарах ĕçлесси, унăн ыйтăвне туллинрех татса парасси – пирĕн паянхи тĕллев. Эпир çавна тума пултаратпăр, мĕншĕн тесен тухăçлă ĕçлеме пирĕн пурлăхпа техника бази пур, хăй ĕçне чунĕпе парăннă тата пуян опыт пухнă ĕçченсем çителĕклĕ, – терĕ хамăр сăмаха вĕçленĕ май Людмила Петровна.

100 çул тултарнă райпо аталанăвĕ районăн пуян историйĕ пулни пирки манăн иккĕленӳ пулмарĕ.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**



Мăн Сĕнтĕрте виçĕм çул уçăлнă «Пиццерия» кафе – райпо çĕнĕлĕхсем шыранин, пурнăç утăмĕпе тан пыма тăрăшнин пĕр утăмĕ. Çакна паян унăн пулăшăвĕпе усă куракан кашниех савăнса палăртать. «Пирĕн патăмăра килсе çӳрекенсем райпо тулли пурнăçпа пурăннине кашни кун курса тăччăр тесе эпир хамăр тăрăшулăха çухатас теместпĕр», – сăн ӳкерĕнме пуçтарăннă май калаçрĕç кафере ĕçлекенсем. Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла): Надежда Одинцова, Ирина Васильева, Ольга Адамова, Алла Петрова.

Кафере пурĕ 7-ĕн ĕçлеççĕ. Уйăхри вăтам тавар çаврăнăш 450 пин тенкĕне яхăн.

# Çĕнĕ лавккасем – райпо илемĕ

**ИСТОРИРЕН.** Раçейри пекех пирĕн районта та потребкоопераци аталанăвĕ йывăррăн вăй илсе пынă. Анчах йывăрлăхсене пăхмасăрах – малалла! Пурнăç аталанăвĕпе пĕр утăмра пырса 1909–1924 çулсенче Сĕнтĕр енре те потребкоопераци тымарланнă. Архив материалĕсене пăхсан асăннă салара вăл 1913 çулхи октябрĕн 31-мĕшĕнче пĕрремĕш утăм тунă. Ырри ырăпах вăй илет. 1921 çулхи выçлăхпа кĕрешнĕ çĕрте малти ретре пулнă Мăн Сĕнтĕр кооператорĕсем ĕмĕр хушшинче ку енри тата паянхи Муркаш районĕнчи халăха экономика тата культура аталанăвĕпе самай малалла утăмлаттарнă. Кунпа пĕрлех нумай йывăрлăха хăй çине илсе ялпа хула хушшинчи уйрăмлăха пĕтерме пулăшнă.




1936 çулта Сĕнтĕрти райпотребсоюз Мăн Сĕнтĕрти, Калайкассинчи, Мăн Хураçкари, Ярославкăри, Юнкăри сельпосене пĕрлештерсе тăнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çулĕсенче вăл районти тĕп хатĕрлев организацийĕ шутланнă. Унтанпа 70 çул хыçа юлчĕ. Мăн Сĕнтĕр райповĕ вара пурнăçпа тан пырса аталанчĕ те тĕрекленчĕ. Ялсенчи пусăрăнчăк лавккасем вырăнне паянхи пурнăç ыйтакан çĕнĕ магазинсем çĕкленчĕç, обществăлла апатлану предприятийĕсем уçăлчĕç. Вĕсене кĕрсен, суту-илӳ тата апатлантару культурипе паллашсан халĕ унтан тухас та килмест. Сăн ӳкерчĕкре эсир паянхи магазин çуртне куратăр. Райпо хăйĕн аталанăвĕнче малалла пысăк утăм туни куç умĕнче.

Паян кулленхи ĕçĕпе, пурнăç ыйтнине пурнăçлассипе республикăра, Раççейре яланах малтисен ретĕнче шутланакан Мăн Сĕнтĕр райповĕ район территорийĕнчи 79 ялти 12 пин ытла çынна таварпа тивĕçтерет. Истори пирки каланă чух района тĕрлĕ çулсенче ăнăçлă ертсе пынă А. Харитонова, Д. Карикова, Н. Налимова, Я. Ершова, Л. Яндушкина, П. Петрова, В. Колбасова асăнмасăр та иртме çук. Вĕсем пуçарнă ĕçе Л. Майкова ертсе пыракан паянхи коллектив çирĕппĕн малалла аталантарса пырать. Çакна райпо çулсеренех республикăра çеç мар, Раççей Федерацийĕн шайĕнчи экономика ăмăртăвĕнче те мала тухни çирĕплетет. Паянхи кунпа пăхсан вăл – район аталанăвĕн ырă йĕрĕ.

# Кил тата хушма хуçалăх



## 2014 çулта пахча çимĕç калчи ӳстерме вăрлăх акмалли уйăх календарĕ

**Урамра шартлама хĕл сивви хуçаланать пулин те, малашлăха пăхакан пахчаçă пахча çимĕç культурисен калчи пирки те шухăшлать ĕнтĕ. Çакна килти хушма хуçалăхрах вăхăтлă пурнăçлани ял çыннин укçи-тенкине перекетлеме пулăшать. Паянах çанă тавăрса ĕçе кӳлĕнсен пахча çимĕç те çемье бюджетне хушма тĕкĕ парĕ. Çавăнпа та хăçан мĕн акассине-лартассине шутлакан ял çыннине эпир паянах вăрлăх янтăлама сĕнетпĕр. Сисмĕпĕр те, хĕллехи сивĕсем çуркуннехи ăшăпа ылмашăнĕç. Сирĕн ĕçе çăмăллатма тата паха вăхăта перекетлеме паян уйăх календарĕ пичетлетпĕр. Кунта тен сирĕн хăвăрăн та сĕнӳ пур. Паллаштарăр опытăрпа. Тав сăмахĕнчен юлмăпăр.**

| Культура | Февраль | Март | Апрель | Май | Июнь | Июль | Август | Сентябрь | Октябрь | Ноябрь |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Кавăн, кабачки, патиссон | 6-11 | 8-11, 14, 15 | 7, 11-14 | 8-13 | 6-12 | 5-11 | 4-8 | 2-5, 8 | 1, 2, 5-7 | 1-5, 30 |
| Арбуз, дыня | 2-5, 6-11 | 3-7, 8-11, 14, 15 | 1-7, 11-14 | 1-4, 8-13, 30, 31 | 1, 4-12 | 2-11, 29-31 | 1-8, 27-31 | 1, 2-5, 8, 26-30 | 1, 2, 5-7, 25-29 | 1-5, 24, 25, 30 |
| Фасоль, пăрçа | 6-13 | 8-15 | 7, 11-14 | 8-13 | 6-13 | 5-11 | 4-8 | 2-5, 8 | 1, 2, 5-7 | 1-5, 30 |
| Шурă пуçлă купăста, чечек купăста, брокколи, | 2-5 | 3-7 | 1-6 | 1-4, 30, 31 | 1, 4, 5 | 2-4, 29-31 | 1-3, 27-31 | 1, 26-30 | 25-29 | 24, 25 |
| Çĕр улми, топинамбур, батат | 16-25, 28 | 17, 18, 21-25, 28 | 18-21, 24-27 | 15-18, 21-26 | 14, 17-25 | 15-24 | 11-22 | 10-18, 21, 22 | 9-15, 18-21 | 7-11, 14-20 |
| Çĕр çырли, хăмла çырли | 2-11 | 3-11, 14, 15 | 1-7, 11-14 | 1-4, 8-13, 30, 31 | 1, 4-12 | 2-11, 29-31 | 1-8, 27-31 | 1, 2-5, 8, 26-30 | 1, 2, 5-7, 25-29 | 1-5, 24, 25, 30 |
| Симĕсле çимелли сухан | 2-11 | 3-11, 14, 15 | 1-7, 11-14 | 1-4, 8-13, 30, 31 | 1, 4-12 | 2-11, 29-31 | 1-8, 27-31 | 1, 2-5, 8, 26, 30 | 1, 2, 5-7, 25-29 | 1-5, 24, 25, 30 |
| Сухан | 16-21 | 17-23 | 16-21 | 15-18 | 14, 17, 18 | 15-18 | 11-16 | 10-15 | 9-14 | 7-11 |
| Кишĕр, хрен, пастернак | 16-21 | 17-23 | 16-21 | 15-18 | 14, 17, 18 | 15-18 | 11-16 | 10-15 | 9-14 | 7-11 |
| Хăяр, кукуруза | 2-5 | 3-7 | 1-6 | 1-4, 30, 31 | 1, 4, 5 | 2-4, 29-31 | 1-3, 27-31 | 1, 26-30 | 25-29 | 24, 25 |
| Тутлă пăрăç | 6-11 | 8-11, 14, 15 | 7, 11-14 | 8-13 | 6-12 | 5-11 | 4-8 | 2-5, 8 | 1, 2, 5-7 | 1-5, 30 |
| Хура пăрăç, шăлсăр сухан | 2-11 | 8-11, 14, 15 | 1-7, 11-14 | 1-4, 8-13, 30, 31 | 1, 4-12 | 2-11, 29-31 | 1-8, 27-31 | 1, 2-5, 8, 26-30 | 1, 2, 5-7, 25-29 | 1-5, 24, 25, 30 |
| Петрушка | 2-5 | 3-7 | 1-6 | 1-4, 30, 31 | 1, 4, 5 | 2-4, 29-31 | 1-3, 27-31 | 1, 26-30 | 25-29 | 24, 25 |
| Тымарлăх петрушка | 16-21 | 17-23 | 16-21 | 15-18 | 14, 17, 18 | 15-18 | 11-16 | 10, 15 | 9-14 | 7-11 |
| Помидор | 6-11 | 8-11, 14, 15 | 7, 11-14 | 8-13 | 6-12 | 5-11 | 4-8 | 2-5, 8 | 1, 2, 5-7 | 1-5, 30 |
| Редис, çарăк | 16-21 | 17-23 | 16-21 | 15-18 | 14, 17, 18 | 15-18 | 11-16 | 10, 15 | 9-14 | 7-11 |
| Çулçăллă салат, шпинат | 2-5 | 3-7 | 1-6 | 1-4, 30, 31 | 1, 4, 5 | 2-4, 29-31 | 1-3, 27-31 | 1, 26-30 | 25, 29 | 24, 25 |
| Кăшман, ревень | 16-25, 28 | 17-25, 28 | 16-21, 24-27 | 15-18, 21-26 | 14, 17-25 | 15-24 | 11-22 | 10-18, 21, 22 | 9-15, 18-21 | 7-11, 14-20 |
| Сельдерей | 2-5, 22-25, 28 | 3-7, 24, 25, 28 | 1-6, 24-27 | 1-4, 21-26, 30, 31 | 1, 4, 5, 19-25 | 2-4, 19-24, 29-31 | 1-3, 17-22, 29-31 | 1, 16-18, 21, 22, 26-30 | 15, 18-21, 25-29 | 14-20, 24-25 |
| Укроп, фенхель | 2-11 | 8-11, 14, 15 | 1-7, 11-14 | 1-4, 8-13, 30, 31 | 1, 4-12 | 2-11, 29-31 | 1-8, 29-31 | 1, 2-5, 8, 26-30 | 1, 2, 5-7, 25-29 | 1-5, 24, 25, 30 |
| Ыхра | 6-11, 16-21 | 8-11, 14, 15, 17-23 | 7, 11-14 | 8-13, 15-18 | 6-12, 14, 17, 18 | 5-11 | 4-8 | 2-5, 8 | 1, 2, 5-7, 9-14 | 1-5, 7-11, 30 |
| Суханлă чечексем | 16-21 | 17-23 | 16-21 | 15-18 | 14, 17, 18 | 15-18 | 11-16 | 10-15 | 9-14 | 7-11 |
| Вăрлăхран акмалли чечексем | 2-11 | 8-11, 14, 15 | 1-7, 11-14 | 1-4, 8-13, 30, 31 | 1, 4-12 | 2-11, 29-31 | 1-8, 27-31 | 1, 2-5, 8, 26-30 | 1, 2, 5-7, 25-29 | 1-5, 24, 25, 30 |

Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр

## «Килти хуçалăх тĕп вырăнтан тухмарĕ»



Пурнăç улшăнăвĕнчен юлмасăр тата йывăрлăхсене пăхмасăрах ял пурăнать-ха, çĕнĕ тĕллевсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшать. Çамрăксем çĕнĕ çемье йĕркелесе ачасем çуратаççĕ. Аякран килсе туса парасса кĕтмесĕрех вĕсем хăйсен вăйĕпе пурăнмалли çурт-йĕр çавăраççĕ. Ыранхи куна шанчăкпа пăхаççĕ. Ырă тĕллевсемпе мал туртăмлă улшăну ĕçĕсем, тĕпрен илсен, йăлтах хăйсенчен килнине ăнланаççĕ вĕсем. Çамрăксем хăйсен пурнăçне аслисенчен тĕслĕх илсе йĕркелесе пыма тăрăшаççĕ. Телее, ырă тĕслĕх кăтартакан аслă ăру çыннисем кашни ялтах, кашни урамрах пур. Сахаллăн та мар вĕсем. Ытларахăшĕ килти хушма хуçалăха тытса пырассипе пысăк та пуян опыт пухнă. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Кăмăркассинче пурăнакан Зоя Столярова **(сăн ӳкерчĕкре)** – çавăн йышшисенчен пĕри. Зоя Александровнăн пурнăçĕ паян нумайăшĕшĕн тĕслĕх пулмалла тесе шутлатăп.

Мăн Шашкарти 5 ачаллă хресчен çемйинче 1956 çулта çуралнă хĕр ача ашшĕпе амăшĕшĕн пĕрремĕш пепки пулнă. Çавăнпах Зоя хул пуççийĕ çине шăллĕсемпе йăмăкĕсене пăхасси тата вĕсемшĕн ĕçлесси ачаранах тиеннĕ. Ĕçрен хăрасси пулман унăн. 10 çулта чухнех хĕр пĕрчи колхоз ĕçне явăçма пуçланă. «Питĕ çывăрас килетчĕ, анчах анне ятла-ятлах ĕçе кайма тăрататчĕ. Çывăракан йăмăк-шăллăмсем çине пăхаттăм та хама пурнăç панă хĕрарăма хирĕç калама сăмах тухмастчĕ – пит çумасăрах колхоз ĕçне тухса утаттăм, – аса илчĕ сĕтел хушшине чей ĕçме вырнаçнă хĕрарăм. – Нумай ĕçре аслисемпе тан ĕлкĕрейместтĕмччĕ ĕнтĕ, анчах хама çамрăк тесе çынран кая юлман». Ачаллах ĕçе хăнăхнăранах пулас унăн пурнăçĕ те ăнса пынă. Вăл е ку ĕçе япăх тунă, вăхăтра пурнăçламан, кил таврашĕнче выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк сахал тытнă, ĕçрен пăраннă тени ун тĕлĕшпе нихăçан та пулман.

– 10 çултах колхоз ĕçне явăçни, ача çуратсан та (З. Столяровăн ывăл пур – **ред**.) ĕçе тухмасăр ларманни тивĕçлĕ кану вăхăчĕ çитсен «Ĕç ветеранĕ» ят илме, хушма пулăшупа усă курма пулăшрĕ. Апла пулсан манăн ĕç пурнăçне çĕр-шыв тивĕçлипе хакларĕ тесе шутлатăп, – пĕтĕмлетсе калаçнăн пуллерĕ ĕç ветеранĕ.

Тивĕçлĕ канурине пăхмасăрах Зоя Александровна паян та алă усса лармасть. Ĕçчен хĕрарăм хăйĕн килти хушма хуçалăхĕнче ĕне тытать, сурăхсем усрать, хурсемпе кăвакалсем ĕрчетет, чăхă-чĕпĕпе туслă пурăнать.

– Килти хушма хуçалăха тытса пыма пире Турри хушнă, меллĕ вырăн панă. Умри çырмара хур-кăвакал çу каçипех ырă курать. Ĕни-сурăхне çӳретме те улăх-çаранне инçе каймалла мар. Килти хушма хуçалăха тытса пырасси йăхран йăха куçакан ĕç тесе эпĕ те ун çине алă сулмарăм, хам пурнăçăмăн никĕсĕнчен кăлармарăм, – терĕ мăшăрĕ пурнăçран хăвăрт уйрăлнине тата паян ытларах ывăлĕ пулăшнине палăртса манăн çĕнĕ пĕлĕшĕм.

Хăйĕн ĕмĕрĕнче ĕçрен ютшăнман хĕрарăм 33 çул Мăн Сĕнтĕрти больницăра санитаркăра вăй хунине те ĕçри паттăрлăх тесе хак парас килет паян. Çăмăл-и-ха ял хĕрарăмне пурнăçри йывăрлăхсене çĕнсе пыма? Ку ыйту патне çитсен Зоя Александровна чӳречерен тинкерсе шăппăн пăшăлтатрĕ:

– Çăмăллăхĕ ăçта ĕнтĕ вăл? Ĕçе кайма ялтан Мăн Сĕнтĕре велосипед çине ларса тухсан тăван тавралăх илемĕпе киленсе юрă юрласа пыраттăм, ĕçе çитсен мĕн пурнăçламаллине палăртаттăм. Больницăна та юрă юрласах çитеттĕм вара. Кун пек чух яра куна ĕç те ăннăн туйăнатчĕ, – кăмăллăн калаçать З. Столярова.

...Хĕл сивви вăй илнĕ вăхăт. Тӳпери хĕвелĕн те ăшши çукрах-ха. Шартлама сивве систерсе йывăç пӳрт пĕрени шартлатрĕ. Çурçĕр çилĕ пит çăмартисемпе хăлха тăррисене чĕпĕтрĕ. Ура айĕнчи юр тав тунăн кăчăртатрĕ. Тăван тавралăх илемĕпе киленсе, ĕçе юратса пурăннăшăн Зоя Александровнăна тав туса малалла утрăм. Çапла пурăнать ĕçрен нихăçан та пăрăнман, хăйĕн вăйĕ çине çеç шанакан ял çынни.

**А. БЕЛОВ.**

Пĕлме

## Удобрени çук чухне

Удобренипе усă курмасăр тулăх пахча çимĕç туса илме май çуккине кашни пахчаçă пĕлет. Ялта пурăнакан çын минераллă удобренипе те, органикăллипе те анлă усă курать. Ку лайăх. Анчах пĕрпĕр кун минерал тата органика удобренийĕ алă айĕнче çук пулсан мĕн тумалла? Мĕнпе усă курни вырăнлăрах?

Килти хушма хуçалăх тытакан нумай çынна хумхантаракан ыйту вăл. Кун пек чухне вĕлтĕрен шĕвекĕпе усă курма пултаратăр. Ăна çапла хатĕрлемелле: ешĕл вĕлтĕрене тураса витрене тулли тултармалла, унта лĕп шыв ярса пĕр эрне лартмалла.

Усă курас умĕн çак шĕвеке пĕр витре шыва 2 литр хушмалла. Килте хатĕрленĕ удобрени пулчĕ те.

**И. ХВОРОСТОВ.**
**«Сельская жизнь» хаçатран.**

## Килте хатĕрленĕ çĕпре

Ăшă шывпа çунă 100–200 грамм иçĕм çырлине кантăк банкăна ямалла, лĕп шыв хушмалла. Унта кăштах сахăр песукĕ ярсан аванрах пулать. Çак банка анине 4 хут хутлатнă марльăпа çыхса ăшă çĕре 4–5 кунлăха лартмалла. Иçĕм çырли йӳçме пуçласан çĕпре туса чустана хушмалла. Çакăн пек çĕпререн хатĕрленĕ чуста йӳçĕ мар, ырă шăршăллă пулать.

**В. ИВАНОВА.**

Пурнăçран илнĕ сĕнӳсем

## Ĕне патĕнче

Ĕнене пăрулану хыççăн ăшă шыв ĕçтереççĕ. Çак вăхăтра 2 – 3 кун ахаль шыв вырăнне 1 – 2 витре укроп шывĕ парсан ĕне çиллинче мастит пулас хăрушлăх чакать.

Ĕне пĕтĕ е пĕтĕ маррине пĕлес тесен стакана таса шыв ямалла та унта 1 – 2 тумлам тин кăна сунă сĕт тумлатмалла. Тумлам стакан тĕпне анса кайсан – ĕне пĕтĕ, стаканĕпе сарăлса кайса шыва шурă тĕс çапсан – ĕне хĕсĕр.

Ĕне умĕнче яланах çулламалли тăвар выртмалла. Выльăх сывлăхĕшĕн усăллă пулнипе пĕрех вăл апата лайăх ирĕлтерме те пулăшать.

**А. САМОЙЛОВ,**
**выльăх фельдшерĕ.**

# Телепрограмма

с 3 по 9 февраля 2014 года

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 03.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 Телеканал «Олимпийское утро на Первом»
9.15, 4.10 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.20 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ВЕРЬ МНЕ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 Х/ф «ДОКТОР ДУЛИТТЛ»
1.40, 3.05 Х/ф «ЛУКОВЫЕ НОВОСТИ» 16+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «Последнее дело майора Пронина» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «Женское счастье» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИКВИДАЦИЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СИЛЬНЕЕ СУДЬБЫ» 12+
0.40 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
1.40 «Девчата» 16+
2.25 Х/ф «ВОСПИТАНИЕ ЖЕСТОКОСТИ У ЖЕНЩИН И СОБАК» 12+
4.00 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
21.25 Т/с «ШАМАН-2» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Х/ф «ЭТАЖ» 18+
1.15 «КАЗНОКРАДЫ» 16+
2.30 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ОСНОВНАЯ ВЕРСИЯ» 16+
5.00 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

## ВТОРНИК, 04.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 Телеканал «Олимпийское утро на Первом»
9.15, 4.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.25 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ВЕРЬ МНЕ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 Х/ф «ДОКТОР ДУЛИТТЛ 2»
1.40, 3.05 Х/ф «ДВАДЦАТИПЯТИБОРЬЕ» 16+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «Один в океане»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «Женское счастье» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИКВИДАЦИЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СИЛЬНЕЕ СУДЬБЫ» 12+
0.40 «Сборная-2014 с Дмитрием Губерниевым»
1.55 «Честный детектив»
2.30 Х/ф «ВОСПИТАНИЕ ЖЕСТОКОСТИ У ЖЕНЩИН И СОБАК» 12+
3.50 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке)
9.35-9.55 Моменты истины (на чувашском языке)
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
21.25 Т/с «ШАМАН-2» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Х/ф «ЭТАЖ» 18+
1.20 Главная дорога 16+
1.55 «Последний герой» 0+
3.10 Х/ф «ВТОРОЙ УБОЙНЫЙ» 16+
5.05 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

## СРЕДА, 05.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 Телеканал «Олимпийское утро на Первом»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.30 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ВЕРЬ МНЕ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Политика» 18+
1.10, 3.05 Х/ф «ПЛЯЖ» 16+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «Куда уходит память?» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «Женское счастье» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИКВИДАЦИЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СИЛЬНЕЕ СУДЬБЫ» 12+
0.40 «Сборная-2014 с Дмитрием Губерниевым»
1.55 Х/ф «БЫЛО У ОТЦА ТРИ СЫНА»
3.15 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК-18» 16+
4.10 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
21.25 Т/с «ШАМАН-2» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Х/ф «ЭТАЖ» 18+
1.15 Квартирный вопрос 0+
2.20 Дикий мир 0+
3.05 Х/ф «ВТОРОЙ УБОЙНЫЙ» 16+
5.00 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

## ЧЕТВЕРГ, 06.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 Телеканал «Олимпийское утро на Первом»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ВЕРЬ МНЕ» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 Х/ф «ЧУЖОЙ» 16+
2.25, 3.05 Х/ф «ПРИВЕТ СЕМЬЕ!» 12+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «Золотые мамы»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.50 Вести
11.30, 14.30, 17.10 Местное время. Вести-Москва
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «Женское счастье» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИКВИДАЦИЯ» 12+
18.25 «Прямой эфир» 12+
19.20 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Фигурное катание. Командное первенство. Мужчины. Короткая программа
21.10 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Командное первенство. Пары. Короткая программа
22.55 Т/с «СИЛЬНЕЕ СУДЬБЫ» 12+
0.50 «Эстафета Олимпийского огня. Сочи. Обратный отсчет» 6+
2.00 Х/ф «БЫЛО У ОТЦА ТРИ СЫНА»
3.25 Горячая десятка 12+
4.30 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Мир искусства. Эльвира Никитина (на чувашском языке)
9.25-9.55 Дамский угодник. Видеофильм
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш ен

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.35 Спасатели 16+
9.05 «Медицинские тайны» 16+
9.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
21.25 Т/с «ШАМАН-2» 16+
23.15 «Сегодня. Итоги»
23.35 Х/ф «ЭТАЖ» 18+
1.15 «Дачный ответ» 0+
2.20 Дикий мир 0+
3.05 Х/ф «ВТОРОЙ УБОЙНЫЙ» 16+
5.00 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

## ПЯТНИЦА, 07.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00 Новости
5.05 Телеканал «Олимпийское утро на Первом»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где-то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 4.45 «В наше время» 12+
17.00 «Жди меня»
18.00 «Олимпийский канал»
20.14 Церемония открытия XXII зимних Олимпийских игр в Сочи. Прямой эфир
22.45 «Вечерний Ургант» 16+
23.40 Х/ф «ВЕЛИКИЙ МАСТЕР» 12+
2.00 Х/ф «СОЛЯРИС» 16+
3.45 «Сочи. Между прошлым и будущим» 12+

### РТР

5.00 Утро России
8.55 «Битва титанов. Суперсерия-72» 12+
9.55 «Дневник Олимпиады»
11.00, 14.00 Вести
11.30, 14.30 Местное время. Вести-Москва
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 «Прямой эфир» 12+
16.45 Х/ф «ЛЕГЕНДА №17» 12+
20.14 Церемония открытия XXII зимних Олимпийских игр в Сочи. Прямой эфир
22.45 «Философия мягкого пути»
0.00 Х/ф «КЛУШИ» 12+
2.15 Х/ф «ПОДМОСКОВНЫЕ ВЕЧЕРА» 16+
4.15 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
8.55 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
9.30-9.55 Телеюрă
11.30-11.50 Вести-ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.40, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.55 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
23.35 Х/ф «ЭТАЖ» 18+
1.50 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
2.45 Х/ф «ВТОРОЙ УБОЙНЫЙ» 16+
4.45 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

## СУББОТА, 08.02

### ПЕРВЫЙ

5.45, 6.10 Х/ф «КИТАЙСКАЯ БАБУШКА» 12+
6.00, 10.00, 18.10 Новости
7.35 «Играй, гармонь любимая!»
8.20 Дисней-клуб: «София Прекрасная»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.10 К юбилею актрисы. «Ирина Муравьева. «Не учите меня жить!» 12+
11.15 Церемония открытия XXII зимних Олимпийских игр в Сочи
13.45, 15.00 «Энциклопедия зимней Олимпиады»
14.00 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Лыжи. Женщины. Скиатлон
15.30 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Коньки. Мужчины. 5000 м
18.25 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Фигурное катание. Командный турнир. Танцы. Короткая программа. Женщины. Короткая программа. Прыжки с трамплина. Мужчины
21.30 «Время»
22.00 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Фигурное катание. Командный турнир. Пары. Произвольная программа. Прыжки с трамплина. Мужчины
0.00 «Сочи-2014»
0.30 Х/ф «РЫЦАРЬ ДНЯ» 12+
2.35 Х/ф «ДЖОРДЖ ХАРРИСОН: ЖИЗНЬ В МАТЕРИАЛЬНОМ МИРЕ» 16+
4.25 «В наше время» 12+
5.20 «Контрольная закупка»

### РТР

4.50 Х/ф «СТАРИКИ-РАЗБОЙНИКИ»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет. «Астраханский заповедник» «Сенегал. В тени баобаба»
11.20 «Дневник Олимпиады»
11.50 Х/ф «ДОМРАБОТНИЦА» 12+
14.30 Шоу «Десять миллионов»
15.35 Субботний вечер
17.15 «Прямой эфир» 12+
18.20 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Биатлон. Спринт. Мужчины
20.00 Вести в субботу
20.35 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Санный спорт. Мужчины
22.05 Х/ф «ЛЕГЕНДА №17» 12+
0.55 Х/ф «СТРАХОВОЙ СЛУЧАЙ» 12+
2.55 Х/ф «ЦИНИКИ» 16+

### ЧУВАШИЯ

8.10-8.20 Вести-Чăваш ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

### НТВ

5.40 Т/с «ЗАВЕЩАНИЕ ЛЕНИНА» 12+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.20 Х/ф «РЖАВЧИНА» 16+
15.10 Своя игра 0+
16.15 Следствие вели...16+
17.15 «Очная ставка» 16+
18.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
19.50 «Новые русские сенсации» 16+
20.45 Ты не поверишь! 16+
21.45 Х/ф «ИДЕАЛЬНОЕ УБИЙСТВО» 16+
23.40 Х/ф «ЧЕСТЬ» 16+
1.35 Авиаторы 12+
2.10 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
3.00 Дикий мир 0+
3.10 Х/ф «ВТОРОЙ УБОЙНЫЙ» 16+
5.05 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

## ВОСКРЕСЕНЬЕ, 09.02

### ПЕРВЫЙ

5.45, 6.10 Х/ф «ГУСАРСКАЯ БАЛЛАДА»
6.00, 10.00, 12.00 Новости
7.45 «Армейский магазин»
8.15 Дисней-клуб: «София Прекрасная»
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.10, 0.55 «Сочи-2014»
10.30, 13.15 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Сноуборд. Женщины. Слоупстайл
11.40, 14.25, 17.30, 20.00 «Энциклопедия зимней Олимпиады»
12.10 «Первая пара. Больше, чем любовь» 12+
15.30 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Коньки. Женщины. 3000 м
18.30 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Биатлон. Женщины. Спринт. Санный спорт. Мужчины
21.00 Воскресное «Время»
22.00 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Санный спорт. Мужчины
22.25 Церемония открытия XXII зимних Олимпийских игр в Сочи
1.25 Х/ф «ЛЮБОВЬ И ПРОЧИЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВА» 16+
3.20 «В наше время» 12+
4.15 «Контрольная закупка»

### РТР

5.15 Х/ф «НЕ МОЖЕТ БЫТЬ!»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Телеигра
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00 Вести
11.10 «Дневник Олимпиады»
11.40 Х/ф «СЛУЖАНКА ТРЕХ ГОСПОД» 12+
13.40 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Лыжные гонки. Скиатлон. Мужчины
15.35 «Смеяться разрешается»
16.40 Х/ф «МАША И МЕДВЕДЬ» 12+
18.40, 22.00 Вести недели
18.50 XXII зимние Олимпийские игры в Сочи. Фигурное катание. Командное первенство. Произвольная программа
23.30 Х/ф «ОБРАТНЫЙ БИЛЕТ» 12+
1.20 Х/ф «ТРИ СЕСТРЫ» 12+
3.45 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### НТВ

6.05 Т/с «ЗАВЕЩАНИЕ ЛЕНИНА» 12+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
10.55 «Чудо техники» 12+
11.25 «Поедем, поедим!» 0+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.20 Х/ф «РЖАВЧИНА» 16+
15.10 Своя игра 0+
16.15 Следствие вели... 16+
17.15 «Очная ставка» 16+
18.20 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа» с Кириллом Поздняковым
19.50 «Темная сторона» 16+
20.40 Х/ф «ДОКТОР СМЕРТЬ» 16+
0.30 «Школа злословия» Андрей Шаронов 16+
1.15 Авиаторы 12+
1.50 «Дело темное» Исторический детектив 16+
2.40 Дикий мир 0+
3.10 Х/ф «ВТОРОЙ УБОЙНЫЙ» 16+
5.10 Т/с «ПРЕСТУПЛЕНИЕ БУДЕТ РАСКРЫТО» 16+

Район судĕнче

## Кивçен пама васкамалла мар

Хаçатăн иртнĕ номерĕнче эпир вулакансене займ илесси-парассин килĕшĕвне пурнăçламасан ĕç-пуçа суд урлă татса памалли пирки конкретлă тĕслĕхсе паллаштарнăччĕ.

Паян вара калаçăва малалла тăсатпăр. Тепĕр чух займ илесси-парассипе çыхăннă лару-тăрура суда сăлтавсăрах искпа тухнă тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ.

Акă Мускавра пурăнакан Шумов (**ред.**: кунта та, малалла та хушаматсене улăштарнă.) гражданин Муркаш район судне искпа тухрĕ. Вăл пирĕн районта регистрациленнĕ тата пурăнакан Кульев гражданинран ăна займ килĕшĕвĕ тăрăх кивçен панă 200000 тенкĕне, çак суммăпа усă курнăшăн 40000 тенкĕ процент укçине шыраса илме тата суд расхучĕсене саплаштарма ыйтнă. Çакна вăл 2011 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче Кульев гражданин унран 1 уйăхлăха 200000 тенкĕ кивçен илнипе тата унпа усă курнăшăн уйăхра 5 процент хушса тавăрса пама шантарнипе, анчах та тавăрса паманнипе сăлтавланă.

Судра вара Кульев Шумовран нихăçан та укçа кивçен илменнине тата ун пек килĕшӳре алă пусманнине ăнлантарса панă. Çак гражданла ĕçпе суд экспертиза ирттерчĕ. Экспертиза займ илнĕ пирки тунă килĕшӳре Кульев алă пусманнине, ăна майлăрах çырса унăн ячĕпе урăх çын алă пуснине кăтартса пачĕ.

Судра Шумов Кульев кивçен укçа тавăрса паманнине çирĕплетсе параймарĕ, çапла вара унăн искне суд тивĕçтермесĕр хăварчĕ. Суд йышăнăвĕпе килĕшмесĕр Шумов Чăваш Республикин Аслă судне апелляци çăхавĕ çырчĕ, анчах та Аслă суд та унăн искне тивĕçтермерĕ.

Калаçăва вĕçлесе хаçат вулакансене асăрхаттарса хăварас килет. Кама та пулин укçа кивçен париччен малтан унăн сире укçана каялла тавăрса пама майсем пуррипе интересленĕр. Пысăк процентпа каялла тавăрса парăп тенине пур чухне те ĕненме юраманнине пурнăçри чылай тĕслĕх кăтартса парать. Хăвăра шанчăклă туяс тесен акă Чăваш Республики тăрăх Суд приставĕсен федераци службин управленийĕн сайтне, Суд приставĕсен федераци службин сайтне кĕрсе кивçен илес текен çын штраф е ытти тӳлевсем тӳлеменнисен йышĕнче маррине тĕрĕслеме май пур.

**Т. САЛДЫРКИНА,**
**ЧР Муркаш район сучĕн судйи.**

Следстви комитетĕнчен

## Ĕçеççĕ, кайран...

Раççей Федерацийĕн Следстви комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи пайĕ Муркаш районĕнчи 30 çулхи преступник тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе следстви вĕçлерĕ. Ăна РФ УК 105 статйин 1 пайĕпе (вĕлерни), РФ УК 158 статйин 2 пайĕн «б» пункчĕпе (сурт-йĕре кĕрсе вăрлани – 8 эпизод) тата çакăн йышши тепĕр преступленишĕн (вăрлама тăни) айăплаççĕ.

2013 çулхи октябрь уйăхĕ, кăнтăрла. Ку вăхăтра, паллах, йĕркеллĕ çын хĕрӳ ĕçре. Пĕр ялти çамрăк арçынпа хĕрарăм вара урăх енĕпе тимлет, хаяррипе, тĕрĕсрех каласан, ку хутĕнче одеколонпа рехетленет. Иккĕшĕ те вăй питти çулсенчисем. Намăс та мар-и, мĕн патне çитсе пыратпăр капла?

Тăн-пуç минресен, паллă ĕнтĕ, лару-тăру ыррипех вĕçленмест. Пĕри сăмах чĕнет, тепри вара вирлĕреххине лаплаттарса хурать. Ара халĕ пĕртанлăх вĕт, никамăн та пуç усса хăраса ларас килмест. Çакăн пек самантра кашнин хăй вырăнне, вăхăтра чарăнмаллине пĕлсен лайăх та, çук çав. Арçыннăн йывăр чышкă вара часах чăмăртанать. Ку хутĕнче те çаплах килсе тухнă. Тискерленнĕ арçын хĕрарăма çине-çинех патакпа хĕненĕ, çапла вара вăл хуçăлса пĕтиччченех аташнă. Вăйсăрланнă хĕрарăм йăлăнăвĕ те ăна лăплантарайман. Халсăрланса-сурланланса çитнĕскер урайне тĕшĕрĕлсе аннă. Ниепле те чарăнайман-ха арçын, читлĕхрен тухса тарнă тискер кайăк тейĕн. Йывăр чăмăр çаплах тӳпелтерĕ, черетре – çĕçĕ. Унпа касса-чиксе пĕтернĕ хыççăн текех хĕрарăм сывлайми пулнă. Тискер ĕçе вĕçне çитернĕ, анчах чунĕнчи пĕр хĕлĕх те тапранман унăн, хĕрарăма пулăшас тесе аса та илмен. Вилнĕ çынна икĕ михĕ тăхăнтартнă та ун çине çивитти хунă, вăл ăна пытарма хатĕрленнĕ, анчах та самантлăха тесе канма выртнă. Лăпкă ыйхăна право йĕркине сыхлакан орган сотрудникĕсем татнă.

Çапла вара уголовлă ĕç тĕлĕшпе следстви пуçланă. Айăплă çын унччченхи преступленисем пирки те аса илнĕ. Çӳлерех асăннă преступленисĕр пусне ют çын пурлăхне хапсăннăскер 8 преступлени тунă. Вăл дача сурчĕсен кантăкĕсене, алăкĕсене çĕмĕрсе кĕрсе тĕрлĕ япала вăрласа тухнă. Çав преступленисенче 10 пин те 600 тенкĕлĕх сиен кӳнĕ. Тепĕр çурта кĕрсен вара хăйне кирлине нимĕн те тупайман.

**И. ФЕДОТОВ,**
**следователь.**

Прокуратурăран

## Сирĕн енче çул-йĕре юртан тасатаççĕ-и?

Район прокуратурине Хорачкара пурăнакансенчен çыру-çăхав килчĕ. Унти ушкăн Мăн Сĕнтĕр – Хорачка – Ишмула маршрутлă автоçула тивĕçлĕ шайра тытманнине палăртнă. Çавна май асăннă орган тĕрĕслев ирттерчĕ.

Муркаш район администрацийĕ «ПГС-1» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа муниципалитет контракчĕ тунă. Унпа килĕшӳллĕн асăннă обществăн çак автоçул-йĕре тытса-тасатса тăмалла.

Тĕрĕслев çакна çирĕплетрĕ. Çул-йĕре юртан вăхăтра тата кирлĕ пек тасатмаççĕ, çул-йĕр пăрланнине сирмелли материалпа усă курмаççĕ, çавăн пекех ытти çитменлĕх те курăнать кунта. Апла пулсан кунти ĕç-хĕл тивĕçлĕ шайра пурнăçланмасть.

Çӳлерех асăннă фактсене тĕпе хурса «ПГС-1» чикĕллĕ яваплăхлă общество тĕлĕшпе асăрхаттару çырнă, çитменлĕхсене пĕтермеллине тата малашне ĕçе тивĕçлĕ шайра пурнăçламаллине палăртнă.

## Тĕрĕслев – суту-илӳре

Саккунпа килĕшӳллĕн суту-илӳ организацийĕсенче ĕç вырăнĕсене аттестацилемелле. Тĕрĕслев ку тĕлĕшпе районти 10 объектра иртрĕ. 5 лавккара ĕç вырăнĕсене аттестацилеменнине тупса палăртрăмăр. Çавна май 5 асăрхаттару çырнă, çавăн пекех КоАПăн 5.27 статйипе административлă майпа ответ тыттарнă.

**П. МАКЕЕВ,**
**прокурор пулăшуçи.**

Тав тăватпăр

Пирĕн çывăх çыннăмăра, хĕрĕме, мăшăра, аннене, йăмăка, кирек хăçан та пулăшма хатĕр çынна – Атапай ялĕнче пурăннă Галина Николаевна Вязовăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн хуйха пĕрле пайланăшăн Муркаш район администрацийĕн пуçлăхне Ростислав Тимофеева, унти ытти ĕçченсене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, тус-юлташĕсене, «Шупашкарти троллейбус управленийĕ» муниципалитет унитарлă предприятин «Березка» санаторийĕн ĕçченĕсене, ял-йыша, кунта хутшăннă мĕн пур çынна тав сăмахĕ калатпăр.

**Çывăх çыннисем.**

Сăвă

## Сукмак

Умра – сукмак, утап васкавлă
Уйпа, ял çумĕн, вăрманпа,
Пырап хирпе. Тăван тавралăх
Тухса тăрать тулли сăнпа.

Утас, утсан темле инçет те
Ума килет, утма вăй пур.
Часах сукмак мăн çул çине те
Ертсе каларĕ. Шанăç пур.

**Папак Мишши.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**7 февраля с 10 до 11 час. в Р Д К**
**Слуховые аппараты** от 6200 до 18000 руб.
Выезд на дом бесплатно. т. 89225036315. **Скидки от 10 до 20 % !**
**При сдаче старого аппарата скидка до 2000 руб!**
**И товары для здоровья: Активатор «Живая-Мертвая» вода.**
**Дыхательный тренажер «Самоздрав». Очки Панкова.**
**Аппликатор «Ляпко». Гриб «Копринус» - от тяги к алкоголю.**
*По противопоказаниям – консультация специалиста.*
ИП Коробейникова Е.М. Св-во 305183220300021 от 22.07.2005 г. Ижевск

Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 7-23.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 4-68.




Ремонт стиральных машин-автоматов и ремонт газовых (Мора и Горинье) плит. Гарантия. Быстро. Качественно. Тел.: 38-58-45, 8-927-668-58-45. 6-10.

* * *

Бурение колодцев. Колодезные кольца. Доставка. Установка. Тел.: 8-927-668-96-96. 7-10.

* * *

ПРОДАЮ ЯЧМЕНЬ, ПШЕНИЦУ И ОВЕС. Тел.: 8-905-199-61-77. 5-5.

* * *

Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 4-12.

Продаю дрова колотые, возможна доставка.
Тел.: 8-937-384-56-18. 2-2.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр.
Тел.: 8-987-665-02-13. 2-2.

* * *

Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 3-10.

* * *

ИП Акимов А.В. изготовляет на заказ деревянные и пластиковые окна, двери из массива сосны, керамзитобетонные блоки, навесное оборудование к мотоблокам от производителя. Тел.: 8-905-341-02-86, 8-927-852-26-85. 2-10.

* * *

Виçĕ уйăхри вăкăр сутатăп.
Тел.: 8-919-670-00-23.

Спутниковое цифровое телевидение
ТРИКОЛОР 200 каналов – 7500 руб. 4-10.
ТЕЛЕКАРТА 50 каналов – 3500 руб.
Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30.

ООО «ОБРЯД» оказывает следующие виды ритуальных услуг:
изготовление и установка надгробных памятников, также для умерших (после 12.06.1990 г.) участников ВОВ.
Реализует кресты, гробы, ограды, столы, скамейки, венки и пр.
Изготовление портретов на гранитной плите.
Адрес: г. Чебоксары, переулок Ягодный, д. 4 «А», тел.: 8(8352)35-10-83, 8-903-389-99-29; с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2, тел.: 8-903-063-41-42. 3-3.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.
Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 3-10.

В связи с открытием АЗС требуются операторы и заправщики. Официальное трудоустройство. Достойная заработная плата.
Тел.: 8(83541)69-8-11. 3-3.

Требуется продавец-консультант с медицинским образованием в «Оптику Гранд», (с. Моргауши). З/п от 14000 руб., график работы 5/2, соц. пакет.
Тел.: 8-937-395-87-29. 1-4.

* * *

Çĕнĕ çул вăхăтĕнче хура пысăк çăмламас ăратлă йытă (водолаз) çухалчĕ. Тупса паракана укçа парса тав тăватăп. Тел.: 63-0-52, 8-919-674-41-16.

* * *

Пĕрремĕш пăруланă хĕрлĕ ĕне сутатăп. Карамалькасси ялĕ. Тел.: 8-987-123-05-29.


* * *

В объявлении о согласовании проекта межевания земельных участков, опубликованного в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 2 ноября 2013 года в № 82 (8148) стр. 7, в 1 колонке, допущены опечатки. Вместо «Шишокина Елизавета Ивановна» следует читать «Шишокина Елизавета Евгеньевна», вместо «Красновой Р.Н., номер квалификационного аттестата 21-11-28 от 08.02.2011 г.» следует читать «Карзаковой М.А., номер квалификационного аттестата 21-12-49 от 20.12.2012 г.»

Прогноз погоды

| | суббота 1 февраля | | | | воскресенье 2 февраля | | | | понедельник 3 февраля | | | | вторник 4 февраля | | | | среда 5 февраля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -21 | -18 | -15 | -19 | -23 | -17 | -14 | -14 | -16 | -13 | -12 | -12 | -17 | -17 | -13 | -14 | -18 | -17 | -17 | -21 |
| Давление мм | 771 | 771 | 772 | 771 | 771 | 770 | 768 | 765 | 762 | 760 | 758 | 757 | 756 | 754 | 753 | 751 | 750 | 751 | 754 | 756 |
| Влажность % | 84 | 79 | 86 | 84 | 78 | 74 | 82 | 77 | 87 | 83 | 89 | 86 | 92 | 83 | 88 | 91 | 86 | 81 | 84 | 83 |
| Ветер м/сек | 2 | 2 | 3 | 4 | 3 | 3 | 6 | 7 | 5 | 3 | 4 | 4 | 2 | 2 | 2 | 4 | 3 | 4 | 2 | 1 |
| | З | З | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | З | З | Ю-З | Ю-З | Ю-В | Ю-В | Ю | В | В | В | Ю |
| Солнце восход / заход | | 08:46 | 17:26 | | | 08:44 | 17:28 | | | 08:42 | 17:30 | | | 08:40 | 17:32 | | | 08:38 | 17:35 | |
| Луна восход / заход | | 08:55 | 20:08 | | | 09:19 | 21:32 | | | 09:42 | 22:54 | | | 10:05 | - | | | 10:29 | 00:12 | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикинче – Чăваш Енре ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ан çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрахисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 31.01.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 5074.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.